Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 ИЙУЛЬ 5 ЫТЛАРИКУН 153 (4966) №

Чăваш Коммунĕ

21-мĕш çул тухать — *ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомăн хаçачĕ* — Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—67, Ред. заместителĕн 0—88, Редакци секретарĕн 4—40, Дежурнăйĕн 6—23

Хуçалăх ĕçĕнчи çене çĕнтерӳсемшĕн

Суйлав кампани вăхăтĕнче пирĕн парти тавра çĕнĕ кадрсем ӳссе çитĕнчĕç. Партире тăман пиншер активиссем округсемпе участкăсенчи суйлав комиççи членĕсем, доверенăйсем, агитаторсем пулса ĕçлерĕç.

Вĕсем, коммунисемпе пĕрле, сталинла блок кандидачĕсемшĕн начар мар агитаци турĕç. Вĕсен ĕçĕ куç умĕнче: суйлавра коммунисемпе партире тăманнисен блокĕ, сойузĕ çĕнтерчĕ. Çак факт вăл татах та татах халăх хушшинчи вăй иксĕлми çăл куçĕ пек тапса тăни çинчен калать. Парти организацисен задачĕ—çак хаклă капитала—партире тăманнисен активне пăхса çитĕнтересси пулать. Çак актив хушшинче куллен-кун ĕçлемеле, вĕсен йышне нумайлатса пымала.

РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен суйлавне чăваш халăхĕ социалисăм строительствин пур участкисенче те пысăк çĕнтерӳсем тунипе çитрĕ. Халăх хушшинче политикăлă тата производствăлă çĕкленӳ нихçанхинчен те вăйлă пулчĕ. Производствă планне нихçан тултарман предприйатисем суйлава плана тултарнипе çитрĕç. Чылай предприйатисем 1938 çулти çурçул планне срукчен тултарчĕç. Çĕнĕ стройкăсенче хăшпĕр улшăнусем палăрма пуçларĕç. Уйрăмах колхозниксем тăрăшса ĕçленине палăртмала. Вĕсем пур ĕçре те течĕ пекех пысăк çĕнтерӳсем турĕç. Кун çинчен кăçалхи çуракине нихăш çулхинчен те организацилĕрех иртерни, сталинла 7—8 мĕлйард пăт тырăшăн çине тăрса кĕрешни лайăх кăтартса парать.

Халĕ пирĕн умра тăракан ĕçсем çинчен тĕплĕнрех шутласа пăхас пулать. Суйлава лайăх иртернинчен тумали пирвайхи вывăд вăл—суйлав кампани вăхăтĕнче халăх çĕкленнипе усă курса пур ĕçсене те вăхăтра тата пысăк пахалăхпа туса пымала тăвасси пулать. Пирĕн хастарлăхсем пысăк, анчах чылай чухне çак хастарлăха организацилеме пĕлесси кайра пырать.

Илĕпĕр йалхуçалăх ĕçĕсенех. Çуракине организацилĕн, иртнĕ çулхисенчен темиçе хут лайăхрах иртерни пире кăçал тата вăйлăрах тырпул туса илме май парать. Анчах çак вăйлă тырпула пухса кĕме хатĕрленесси çаплах начар пырать-ха. Машинсем хатĕр мар. Чылай çĕрте хăш машин çинче кам ĕçлесси те паллă мар. Графиксене туса пĕтермен. Çав вăхăтрах тыр патне тухасси нумай йулман.

Пурте пĕлеççĕ—çумкурăкĕ йал хуçалăхне пысăк сийен кӳрет. Çав вăхăтрах чылай райçĕрĕç пайĕсен пуçлăхĕсемпе МТС директăрĕсем колхоз уйхирĕсене çумкурăксем пусса илнипе килĕшеççĕ. Çĕрпӳ, Йĕпреç, Канаш, Йетĕрне районĕсенче çумçумлас плана пурĕ те 4—8 процентран ытла тултарманни тата урăх мĕн çинчен калатăр-ха? Тутаркас районĕнчи Шашкар тăрăхĕнчи колхоз уйхирĕсем антраçарăк айне пулса ларни те çавăн çинченех калать. Райĕçтăвком председателĕсен, райçĕрĕçпай пуçлăхĕсен, МТС директăрĕсен, йалсоветсемпе колхоз правлени председателĕсен уйрăмах—вăрлăхлăх акса хăварнă участкăсене, комбайнсемпе вырма уйăрнă участкăсене çумкурăксенчен пĕтĕмпех тасатса пĕтерес тĕлĕшпе çак кунсенче кирлĕ пек ĕçсем туса иртермеле. „Чăваш Коммунĕнче“ епĕр нумайăх пулмасть ПСК(б)П Чăваш Обкомĕ тырпула пăхса ӳстерессипе ăна пухса кĕртесси çинчен тата ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1938 çулти тырпула пухса кĕртесси çинчен йышăннă постановленисене пичетлесе кăлартăмăр. Вăл постановленисем йалхуçалăх работникĕсемшĕн кулленхи ĕç программи пулса тăмала. Партипе правительствă решенисем тавра пĕтĕм колхозниксемпе совхоз рабочисене мобилизацилесе, социалисăмлă ăмăртăва анлăн сарса кăçалхи тырпула кĕске вăхăтра тата пĕр тăкаксăр пухса кĕртмеле тăвас пулать.

3 республикă ăмăрту догăварне пурвăça кĕртесси Чăваш республикинче мĕнле пынине тĕрĕслеме Тутар республикинчен килнĕ делегаци пирĕн ĕçри чылай пысăк çитменлĕхсене палăртрĕ. Чылай çĕрте ăмăрту догăварĕ çинчен манса кайнă, мала тухассишĕн чăн-чăн вирлĕ кĕрешӳ çук. 3 республикă ăмăртăвĕнче республикăна малти вырăна кăлармала тăвассишĕн кĕрешесси—кашни колхозникăн, совхоз рабочин, çĕрĕç работникĕн хисеплĕ ĕçĕ пулмала.

Промышленнăç предприйатисем лайăхрах ĕçлеме пуçларĕç. Халĕ ĕнтĕ пирĕн хамăр умма çакăн пек задач лартас пулать: орденлă Чăваш республикинче кайа йулса пыракан пĕр предприйати те пулмала мар. Пирĕн предприйатисем плана вăхăтра тултарса пымала, халăх хуçалăхне пысăк пахалăхлă продукци памала.

Строительствă организацисемпе хуçалăх организацисен строительствă хăвăртлăхĕсене темиçе хут вăйлатмала, кăçал тума палăртнă çĕнĕ стройкăсене пурне те вăхăтра туса пĕтермеле.

Чукунçул строительсем Шупашкара реьсăсем хывса çитернипе хăйсем ĕçлеме пултарнине кăтартрĕç. Вĕсен чыслă задачĕ—Канаш—Шупашкар чукунçулне вăхăтра туса пĕтересси пулать.

Вăрман хатĕрлевĕнче, йалхуçалăх продуктисен хатĕрлевĕнче, укçа-тенкĕ пухас ĕçре, çулйĕр строительствинче халех кирлĕ пек улшăнусем туса хуçалăхлă-политикăлă задачсене пурнăçлас ĕçре кайа йулнине пĕтермеле.

Совет Правительстви Виççĕмĕш Пилĕкçуллăх Займом кăлармала тунине ĕççыннисем питĕ пысăк хаваслăхпа йышăнчĕç. Иртнĕ çул оборонă займне Шупашкарта малтанхи 10 кун хушшинче 1. 521. 000 тенкĕлĕх сарнă пулсан, кăçал Виççĕмĕш Пилĕкçуллăх Займне малтанхи икĕ кун хушшинче 1. 548 000 тенкĕлĕх сарнă. Йалта та займ сарас ĕç аван пырать. Партипе совет организацисем 5 мĕлйард тенкĕлĕх займа кĕске вăхăтра вырнаçтарса çитермеле тăвассишĕн пĕтĕм вăйа хурса ĕçлемеле. Кашни ĕççынни аллинче çĕнĕ займ пулмала, кашни çын 2—3 ернелĕх ĕç укçи чухлĕ çĕнĕ займ çыранса илмеле.

Суйлав кампани пĕтĕм халăх коммунисен партишĕн тăнине кăтартрĕ. Халăх коммунисен партишĕн сасăларĕ. Пирĕн малашнехи задач—пĕтĕм халăха социалисăм строительствин пур участкисенче те çĕнĕ çĕнтерӳсем тума мобилизацилесси пулать.

Çĕршыва тата тĕреклĕрех тума

ТРАК (телефон тăрăх). Ийулĕн 1-мĕшпе 2-мĕш кунĕсенче район центрĕнче ĕçлекен рабочисемпе служăщисем çĕнĕ займа 15 пин тенкĕлĕх çыранна. Ийулĕн 2-мĕшĕнче Ӳсĕк йалсоветĕнчи активиссен канашлăвĕ пулчĕ. Кунта çĕнĕ займа сарас ыйтăва сӳтсе-йаврĕç. Колхозник Харитонăв йулташ канашлура тухса каланă чух:

— Епĕр капиталисла çĕршывсенчи ĕççыннисем нушалă пурнăçпа пурăннине лайăх пĕлетпĕр. Вĕсем пирĕн пек савăнăçпа пурăнаймаççĕ. Епĕр телейлĕ, пур йенчен те çителĕклĕ пурнăçпа пурăнатпăр. Пирĕн тăван çĕршыв куллен тĕреклĕнсе пырать, вăл никама пăхăнми вăйлă державă пулса тăчĕ. Виççĕмĕш Пилĕкçуллăх (пĕрремĕш çулхи кăларăм) Займа илме 60 тенкĕлĕх çыранатăп, епĕ перекетленĕ укçа çĕршыва татах та тĕреклĕ тума кайтăр,—терĕ.

Ӳсĕк колхозĕнчи колхозниксем çак канашлурах çĕнĕ займа 750 тенкĕлĕх çыранчĕç. Районри пур колхозсенче те займа пысăк хапăл туса çыранаççĕ. Кушар йалĕнчи колхозниксем пĕр кун хушшинче 1.150 тенкĕлĕх çыранна.

Мак. Иванов

Колхозниксем хаваслăн çыранаççĕ

СĔНТĔРВАРРИ (телефон тăрăх). Районри предприйатисемпе колхозсенче займ вăйлăн сарăлса пырать. Ийулĕн 3-мĕшне илсен районри колхозсенче Виççĕмĕш Пилĕкçуллăх (пĕрремĕш çулхи кăларăм) Займа 17 пин тенкĕлĕх сарнă.

Нерйадăварри „Красный Волгарь“ колхозри колхозниксем нумайăшĕ 100-шер тенкĕлĕх йе ытларах çыранна. Колхозăн двигателĕ çинче ĕçлекен машинис Николай Воронцов 150 тенкĕлĕх çыранни. Колхозĕпе илсен 2.850 тенкĕлĕх çыранна.

Йуртакасси йалсоветĕнчи колхозсенче те çĕнĕ займа хаваслансах çыранчĕç. Пурĕ 2.750 тенкĕлĕх çыранна. Çичĕпӳрт йалсоветне кĕрекен колхозсенче 1.450 тенкĕлĕх çыранна.

Сатур.

Анлăн сарăлать

ТĂВАЙ (телефонпа). Районри ĕççыннисем Совет правительстви Государствăн Виççĕмĕш Пилĕкçуллăх Займне (пĕрремĕш çулхи кăларăм) кăларма йышăннине пысăк хаваслăхпа кĕтсе илчĕç. Çĕнĕ займа çыранасси анлăн сарăлса пырать. Ийулĕн 2-мĕшĕнче пĕр кун хушшинчех районри учрежденисенче ĕçлекен служăщисем 25 пин тенкĕлĕх çыранса илчĕç.

Партипе комсомол райкомĕсем тата райĕçтăвком займ сарас ĕçре пулăшма районри активран йалсене çынсем йачĕç.

Пикишкин.

Йетĕрнери митинг

Правительствă Государствăн Виççĕмĕш Пилĕкçуллăх (пĕрремĕш çулхи кăларăм) Займне кăларнă йатпа ийулĕн 2-мĕшĕнче Йетĕрне хулинчи ĕççыннисен митингĕ пулчĕ. Митингра Йетĕрне райĕçтăвкомĕн председателĕ—РСФСР Верховнăй Совет депутачĕ Малинин йулташ çĕнĕ займ çинчен сăмах тухса каларĕ.

Рабочисем, колхозниксем, интеллигенци Виççĕмĕш Пилĕкçуллăх Займне кăларнăшăн совет правительствине пĕтĕм чĕререн саламлаççĕ, çĕнĕ займа виçĕ ернери ĕçукçинчен кайа мар çырăнма сăмах параççĕ.

Çĕнĕ займа Йетĕрне хулинче малтанхи кун 60 пин тенкĕлĕх çыранна. Займ çыранасси малалла та сарăлса пырать.

М. Йемелйанăв.

Пакăш йалсовечĕ малта

ЁЛЕК, ийулĕн 3 мĕш. Пайанхи куна районри служăщисем хушшинче 21 пин тенкĕлĕх, колхозниксемпе йединоличниксем хушшинче 6 пин тенкĕлĕх займ сарнă.

Займ сарас ĕçре Пакăш йалсовечĕ малта пырать. Унта займ саракан уполномоченнăй Макарăв йулташпа унăн арăмĕ тăрăшса ĕçлеççĕ. Ку йалсоветĕнче малтанхи кунах займа 6 пин тенкĕлĕх ытла сарнă.

Йефремăв.

РСФСР Верховнăй Совечĕн пĕрремĕш çеççине пухасси çинчен

Пĕтĕм Российă Ĕçтăвакан Тĕп Комитет Президиумĕ йышăннă ПОСТАНОВЛЕНИ

Пĕтĕм Российă Ĕçтăвакан Тĕп Комитет Президиумĕ РСФСР Конституцийĕн 39-мĕш статйи тăрăх çапла йышăнать:

Российă Советлă Федеративлă Социалисăмлă Республикĕн Верховнăй Совечĕн пĕрремĕш çеççине 1938 çулхи ийулĕн 15-мĕшĕнче Мускав хулинче пухмала тăвас.

Пĕтĕм Российă Ĕçтăвакан Тĕп Комитет Председателĕ
М. КАЛИНИН.

Пĕтĕм Российă Ĕçтăвакан Тĕп Комитет çекретарĕшĕн Пĕтĕм Российă Ĕçтăвакан Тĕп Комитет Президиум членĕ
А. АРТӲХИНĂ.

Мускав, Кремль.
1938 çулхи ийулĕн 3-мĕш.

Чаплă вĕçев хыççăн

АРХАНГЕЛСК, ийулĕн 2-мĕш. Çевастопольрен Архангельска пĕр лармасăр вĕççе тухнă гидросамолот çинче пулнă виçĕ мухтавлă летчицăсене йуратса, йышăн тăрăшса пăхаççĕ. Самолет анса ларнă Холмовски кӳллин илемлĕ çыранĕ çинче вырнаçнă канмали çуртра Полинă Осипенко, Верă Ломако тата Маринă Раскова вăльди чи лайăх пӳлĕмсем уйăрса панă. Вĕсене канма пур йенчен те лайăх условисем туса панă. Анчах телефон шăнкăртатнă сасăсем вĕсене канма час-часах кансĕрлеççĕ: мухтавлă летчицăсен йачĕпе Мускаврай тата Çевастопольрен пит нумай саламлă телеграммăсем килеççĕ.

(ТАСС).

Ийулĕн 3-мĕшĕнче Шупашкарта Виççĕмĕш Пилĕкçуллăх (пĕрремĕш çулхи кăларăм) Займ тухнă йатпа пысăк митинг пулчĕ.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Митинга пынă халăх хĕрлĕ площчĕтре.

Цыганов фото-ӳкерчĕкĕ.

Пурте займ илме çыранаççĕ

(Ийулĕн 2-мĕшĕнче илнĕ телефонограммăсем)

ПАТĂРЙЕЛ (телефонпа). Район центрĕнчи рабочисемпе служăщисем 5.700 тенкĕлĕх, колхозсенче 5.200 тенкĕлĕх займ çыранна. „Восход“ колхозра 700 тенкĕлĕх, Ленин йачĕпе тăракан колхозра 1.245 тенкĕлĕх çыранна.

Çĕнĕ займа çыранас ĕç „Красная знамя“ колхозра аван пырать. Ку колхозра колхозниксем пурте çĕнĕ займ илеççĕ. Займ уполномоченнăйĕ Йевграфăв Владимир йал халăхне çĕнĕ займ çинчен каласа ăнлантарса панă хыççăн колхозниксем 1.100 тенкĕлĕх, йединоличниксем 90 тенкĕлĕх займ çыранна. Çав вăхăтрах „Красная знамя“ колхоз колхозникĕсем çĕнĕ займшăн 412 тенкĕ укçа тӳленĕ. Районра çĕнĕ займа çыранас тата укçа пухас ĕç вăйлăлансах пырать.

ИШЛЕЙ. Çĕнĕ займ кăларни çинчен радиопа пĕлтернине илтсенех районри ĕççыннисем займ илме çыранма пуçларĕç. Малтанхи кунах райĕçтăвкомăн пайĕсенче 11.600 тенкĕлĕх, Госбанкра ĕçлекенсем 2.750 тенкĕлĕх тата Чурачăк йалсоветĕнчи колхозниксем 765 тенкĕлĕх займ çыранна. Район центрĕнче ийулĕн 2-мĕшĕнче 20 275 тенкĕлĕх займ илме çыранна. Ĕççыннисем:

— Епĕр займа хаваслансах çыранатпăр. Пирĕн займсем хамăрăн пурнăçа аванлатма, çĕршыва тĕреклетме çĕре кайаççĕ. Епĕр займ илмесĕр пĕри те йулмастпăр,—теççĕ.

ШĂМĂРШĂ. Халăха çĕнĕ займ çинчен ăнлантарса пама ийулĕн 2-мĕшĕнче ПСК(б)П Шăмăршă райкомĕ кашни йалах коммунисене йачĕ. Халĕ пур çĕрте те çĕнĕ займ кăларнă йатпа хаваслă митингсемпе пухусем пулса иртеççĕ. Ĕççыннисем çĕнĕ займа хаваслансах çыранаççĕ.

Займ çыранас ĕç пуçланнă кунах район центрĕнчи рабочисемпе служăщисем 36 пин тенкĕлĕх займ илме çыранчĕç. Асанкасси йалсоветĕнчи колхозниксем 1.820 тенкĕлĕх çыранчĕç.

ЙЕТĔРНЕ. Ийулĕн 2-мĕшĕнче хулари рабочисемпе служăщисем хушшинче 85 пин тенкĕлĕх, килхуçи хĕрарăмĕсем хушшинче 1.000 тенкĕлĕх займ сарнă.

Займ çыранас ĕç районра пуринчен малтан спирт савăчĕпе çу савăтĕнче пуçланчĕ. Спирт савăтĕнче ĕçлекенсем 10.200 тенкĕлĕх, çу савăтĕнче ĕçлекенсем 12.400 тенкĕлĕх займ илме çыранна. Халĕ пур çĕрте те займа пысăк хаваслăхпа çыранаççĕ.

ЙĔПРЕÇ. Правительствă çĕнĕ займ кăларнине районри ĕçхалăхĕ пысăк кăмăлпа кĕтсе илчĕ. Займа кашни рабочи, кашни служăщи, кашни колхозник хаваслансах çыранаççĕ. Ийулĕн 2-мĕшĕнче Буинскăри сланец кăларакан шахтăри рабочисен пухăвне ПСК(б)П Йĕпреç райкомĕнчен Николайĕв йулташ пырса çĕнĕ займ çинчен каласа кăтартсан кашни рабочи займ илме çыранна. Çапла вара ийулĕн 2-мĕшĕнче шахтăри рабочисем—1.780 тенкĕлĕх, Буинскăри хăма çуракан рабочисемпе служăщисем 10 360 тенкĕлĕх, вăрман хуçалăхĕнче ĕçлекенсем—3 320 тенкĕлĕх, кооплеспромра—10 215 тенкĕлĕх çыранна. Малтанхи кун район центрĕнчи рабочисемпе служăщисем пурĕ 54 пин тенкĕлĕх займ илме çыранна.

„Красный боец“ колхоз колхозникĕсем 600 тенкĕлĕх займ çыранна. Районри пур колхозсенчи колхозниксем те çĕнĕ займа илме çыранаççĕ.

МĂН СĔНТĔР (телефонпа). Государствăн Виççĕмĕш Пилĕкçуллăх (пĕрремĕш çулхи кăларăм) Займне кăларнине пĕлсенех, Тутаркас районĕнчи ĕççыннисем пысăк хаваслăхпа çĕнĕ займа çыранма пуçларĕç. Малтанхи кунах райĕçтăвкомра ĕçлекенсем 2.500 тенкĕлĕх, районри финанс пайĕнче ĕçлекенсем 3.000 тенкĕлĕх çыранса илчĕç.

Çĕнĕ займ çинчен ăнлантарма ПСК(б)П райкомĕ 31 çынна йалсене йачĕ.

Тăван çĕршыв оборони татах тĕреклентĕр

ПАТĂРЙЕЛ, ийулĕн 4 мĕш (телефон тăрăх). Районри ĕççыннисем Виççĕмĕш Пилĕкçуллăх (пĕрремĕш çулхи кăларăм) Займа хастарлăн çыранаççĕ. Ийулĕн 4-мĕшне илсен районĕпе 94.000 тенкĕлĕх çыранна.

Рабочисемпе служăщисем çĕнĕ займа пĕр уйăхри ĕç укçи чухлĕ çыранаççĕ.

Сăкăтри „Хĕрлĕ Йалав“ колхоз колхозникĕ Йевграфăв йулташ правительствă çĕнĕ займ кăларнă йатпа пулнă колхозниксен пухăвĕнче çапла каларĕ:

— Правительствă çĕнĕ займ кăларма йышăннине пĕлсен епĕ питĕ савăнтăм. Займа ăнăçлăн вырнаçтаратпăр, татах телейлĕ, савăнăçлă пурăнăç тăватпăр. Тăван çĕршыв оборони татах та вăйлăн çирĕплентĕр. Çавăнпа епĕ çĕнĕ займа 200 тенкĕлĕх çыранатăп,—терĕ.

Çĕнĕ займ тухнă кунах Сăкăтри колхозниксем 2 пин тенкĕлĕх çыранна, çавăнтах 467 тенкĕ укçа пухнă. Колхозник Тиньуков йулташ 150 тенкĕлĕх çыранса укçине çавăнтах тӳлесе татнă. Йевграфăв 50 тенкĕ тӳленĕ, колхозник Сандыркин 100 тенкĕлĕх çыранса 30 тенкĕ тӳлерĕ, унăн арăмĕ Сандыркина 45 тенкĕлĕх çыранна, вăл укçа тӳлесе татнă.

Сăкăт шкулĕнче ĕçлекен учительсем 4000 тенкĕлĕх çыранна.

Н. Пушкин.

ТУРХАН. Ийулĕн 2-мĕшĕнче районри колхозниксем хушшинче 6 пин тенкĕлĕх займ сарнă. „Çĕнтерӳ“ колхоз колхозникĕсем 1.905 тенкĕлĕх займ илме çыранчĕç. Ытти колхозсенче те займ çыранас ĕç аван пырать.

Район центрĕнче кашни учрежденирех çĕнĕ займа çыранна.

ÇĔРПӲ. „Етна“, „Комбейн“, „1-мĕш май“ колхоз колхозникĕсем çĕнĕ займ илме пысăк хаваслăхпа çыранаççĕ. Ийулĕн 2-мĕшĕнче районĕпе 49.000 тенкĕлĕх займ илме çыранна.

Халĕ пур çĕрте те районра çĕнĕ займ çинчен каласусем иртереççĕ.

Тырпулсене пуçтарса кĕртес ĕçе большевикла хатĕрленмеле

Малта пыракан комбайнерсемпе комбайнеркăсен канашлăвĕнче 1935 çулти декаберĕн 1-мĕшĕнче Сталин йулташ çапла каланă: „Тĕштырă хуçалăхĕнче чи ответлă ĕç вăл тырпулсене пуçтарса кĕртес ĕç. Тырпулсене пуçтарса кĕртес ĕç çезонлă ĕç, кĕтсе танине йуратмасть вăл. Вăхăтра пуçтарса кĕретĕн—илетĕн, кайа йулатăн—çухататăн".

Хальь тырпулсене пуçтарса кĕме хатĕрленмели чи хĕрÿлĕ вăхăт. Сталин йулташ каланине кашни колхозникăн, кашни колхоз тата çĕрĕç органĕсен руководителĕсен асăрхаса тăрса тырпулсене пуçтарса кĕртес ĕçе кăтартулăн хатĕрленмеле. Анчах хăшпĕр çĕрте парти, совет, çĕрĕç организацийĕсен тата колхоз руководителĕсем çавна маннă пулас, тырпулсене пуçтарса кĕртес ĕçе хатĕрленес вырăнне, лăпланса ларнă.

Чылай органсен руководителĕсем лăпланса ларнине çак цифрăсем уççăн кăтартса параççĕ: Чăваш Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн сводки тăрăх, ийунĕн 25-мĕшне 100 комбайнран 77 комбайн, 299 молотилкăран 127, 84 автомашинăран 64 çеç йусаса лартнă. Ку вăл машинă-трактăрлă станцисенче. Колхозсенчи машинăсене йусас ĕç тата та йапăх пырать.

Хăшпĕр МТС-семпе колхоз руководителĕсем машинăсене йусани çинчен суйа сведĕнисем панине шута илсен, машинăсене сводкăра кăтартнинчен сахалтарах йусанă. Акă, Шупашкар районĕнчи МТС 7 комбайн йусанă тесе пĕлтерет, тĕрĕсленĕ хыççăн 6 комбайн çеç йусавлă пулнă. Трак МТС ийунĕн 10-мĕшне 12 молотилкă йусанă тесе пĕлтерет, хăйсем ийунĕн 22-мĕшне те 11 молотилкă çеç йусанă. Шăхасан районĕнчи „Ударник" колхоз предçедателĕ ийунĕн 10-мĕшне тăватă ампар йусаса дезинфекциленĕ, тесе пĕлтерет. Тĕрĕссипе ийунĕн 21-мĕшне те пĕр ампарне те йусаман. Шупашкар районĕнчи „Урожай" колхоз предçедателĕ пĕр жнейкă тата икĕ ампар хатĕр, тесе пĕлтерет. Жнейкăпа ампарсем ийунĕн 24-мĕшне те хатĕр мар. Суйа сведĕнисем панисене—государствăна хирĕçле ĕçе—малашне тĕппипех пĕтермеле.

Машинă-трактăрлă станцисен [illegible] комбайнсене пушшăн ĕçлеттерсе пăхманни. Йусанă хыççăн ĕçлеттерсе пăхманни вăл йусаманнине пĕрех. Машинă йусавлă шутланать, анчах ĕçе тухсан, çитменлĕхсем пур пирки, машинă ĕçлеймест. Çавăн пек пулать машинăна йусанă хыççăн ĕçлеттермесен. Тырпулсене пухса кĕртес ĕçре комбайн пит пысăк вырăн йышăнса тăрать. Çавăнпа та вĕсене тĕплĕн йусаса хатĕрлесси çине МТС руководителĕсен уйрăмăнах хытă çавăрăнса пăхмала.

Чылай колхозсен руководителĕсем çапла шутлаççĕ: „Жнейкă пирĕн иртнĕ çул лайăх ĕçлерĕ. Кăçал ăна йусама та кирлĕ мар", теççĕ. Çав шухăш пĕртте тĕрĕс мар. Кирек мĕнле машинăна та ĕçленĕ хыççăн тасатса çу сĕрсе хумала, ĕçleme тытăниччен каллех тасатса сĕрмеле. Çавăн пек шухăш пур колхозсенче чылайĕшĕн машинăсем таса мар лараççĕ. Вĕсене халех тĕрĕслесе пăхса хатĕрлесе çитермеле, йусамалисене йусаттармала.

Тепĕр сийенлĕ шухăш вăл транспăрт хатĕрĕсене, лаша кÿлмели таврашсене, михĕсемпе тарасасене хатĕрлес ĕç çине пĕчĕк ĕç çине пăхнă пек пăхни. Хальь чылай колхозсенче çав хатĕрсем çитмеççĕ, вĕсене хатĕрлесси пуринчен те ытларах кайа йулса пырать. Çавăн пекех тата витнĕ итемсемпе сушилкăсем хатĕрлес ĕç те пит кайа йулса пырать. Çаксем пурте тырпулсене пуçтарса кĕртес ĕçре кирлĕскерсем, вĕсене халех хатĕрлесе çитермеле.

Чылай МТС-сенче машинăсемпе ĕçлекен кадр хисеплĕ вырăнта тăмасть. Канашри МТС комбайнер помошникĕ пулма вĕренекенсен условийĕшĕн пĕртте тăрăшмасть, вĕсем тусанлă урайĕнчех çывăрса пурăнаççĕ. Парачкав тата Шупашкар районĕсенчи МТС-сенче иртнĕ çул ĕçленĕшĕн машиноведсем халиччченех укçа илсе таталман. Çавăнпа та хальь чылай МТС-сенче кадрсем çитмеççĕ. Çитменнине тата çĕнĕрен кадр хатĕрлес ĕç те çителĕксĕр пулса пырать.

Стахановла йухăм тата социалисăмлă ăмăрту кирек мĕнле ĕçре те ĕçе татса паракан вырăн йышăнса тăрать. Колхозсенче тата МТС-сенче те çавна хальь маннă пулас, стахановла ĕçлессине тата социалисăмлă ăмăртăва çÿлĕ вырăна лартайман. Стахановецсем колхозсенче нумай, анчах чылай çĕрте вĕсене курмаççĕ, вĕсене чысламаççĕ, вĕсен опычĕсене ыттисем çине куçарса пымаççĕ.

Нумайах пулмасть Тутар республикĕнчен делегаци килсе социалисăмлă ăмăрту догăвăрне пурнăçа мĕнле кĕртсе пынине тĕрĕслерĕ. Тутар республикĕн делегацийĕ чылай колхозсенче социалисăмлă ăмăртăва формă йенчен çеç хутшăннине, хăшпĕр колхозсенче тата ăмăрту догăвăрне те çырса çирĕплетменнине палăртрĕ.

Тырпулсене пухса кĕртес ĕçре тата çав ĕçе хатĕрленессинче те политикăлă сыхăлăх вăйлă пулмала. Пытанса йулнă халăх тăшманĕсем çав ĕçсенче пысăк сийен тума тăрăшаççĕ. Канаш районĕнчи Шмидт йачĕпе тăракан колхозра кăçал 40 гектар клевер [illegible] вырăнĕсене çитерсе [illegible] ийунĕн 20-мĕшне 40 гектар çеç çĕртме сухи тунă, калчасем пурте çумкурăксем айне пулса ларнă, тырпулсене пуçтарса кĕртес ĕçе нихăш йенчен те хатĕрленмен. Айапĕ кунта пĕтĕмпех колхоз предçедателĕнче, вăл Косарĕв, колхозниксене ĕçе мобилизацилес вырăнне, колхозниксене ĕçке хутшăнтарнă. Шăхасанти МТС трактăрисĕсем хушшинче те хăшпĕрисем ĕçке йаранса трактăрсене ватни пулнă. Çак фактсем пурте халăх тăшманĕсен ĕçне кăтартакан фактсем.

Кăçалхи вăйлă тырпула пуçтарса кĕртес ĕçре хальь мĕн-мĕн тумала-ха?

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Халăх Комиссарĕсен Совечĕ ийунĕн 16-мĕшĕнче тата ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ ийунĕн 17-мĕшĕнче йышăннă постановленисем тăрăх МТС-сенче, колхозсенче тырпулсене пуçтарса кĕртес ĕçе йепле хатĕрленнине пур çĕрте те тĕрĕслесе тухмала. Палăрнă çитменлĕхсене çийĕнчех тÿрлетсе пымала.

МТС сенче йусанă комбайнсене кашниех $2\frac{1}{2}$ сехет хушши пушшăн ĕçлеттерсе пăхмала. Комбайн мĕнле ĕçленине тĕрĕсленĕ чух механиксен, комбайнерсемпе вĕсен помошникĕсен хăйсен те пулмала. Комбайнпа ĕçleme чи лайăх трактăрсене тата лайăх ĕçлекен трактăриссене уйăрса хумала.

Тырпулсене пуçтарса кĕртес ĕçре кирлĕ кадрсене вĕрентсе, ĕçе вырнаçтарса тухмала.

Кашни колхозрах кирлĕ таран урапасем, кÿлмели таврашсем хатĕрлесе, вĕсене ĕçлекенсем çумне çирĕплетсе памала. Çавăн пекех михсемпе шăналăксене те хатĕрлесе хумала. Витнĕ итемсем тата сушилкăсем хальь ĕнтĕ кашни колхозрах хатĕр пулмала.

Кашни колхозăн тырпулсене пуçтарса кĕртмели ĕç планĕ пултăр. Çав плансене колхозниксем хушшинче сÿтсе-йавмала, кашни колхознике уйрăм ĕç патне çирĕплетмеле.

Бригадăсенче, трактăриссем хушшинче массăлă-политикăлă ĕçе, ăнлантару ĕçне çÿлĕ вырăна лартса, социалисăмлă ăмăртăва тата стахановла йухăма çÿлĕ вырăна лартмала. Çапла туни кăçалхи вăйлă тырпула ăнăçлăн пуçтарса кĕме май парать.

Н. Серебренников.

Пуснаркасси колхозĕ йулса пырать

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ „1938 çулти тырпула пухса кĕртесси çинчен" постановлени йышăннăранпа чылай вăхăт иртрĕ. Çав хушăра кашни колхозрах постановленине тĕплĕн сÿтсе-йавма май пулнă. Анчах, Пуснаркассинчи (Сĕнтĕрвăрри р.) „Майан пĕрремĕше" колхозра вăл постановлени çинчен пухура сÿтсе-йавма мар, колхоз предçедателĕ Востров хăй те вуласа тухман, постановлени çинчен пĕлмест те Çавна пула та ĕнтĕ ку колхозра тырпулсене пухса кĕме хатĕрленес ĕç калама çук йапăх пырать.

Колхозра 4 жнейкă. Ку вăхăта çитсе те вĕсене пĕрне те йусама тытăнман. Витнĕ итемсем ним йĕркесĕр лараççĕ, мĕншĕн тесен вĕсене тасатман.

Колхоз предçедателĕнчен:

—Сирĕн колхозра ĕçсем мĕншĕн вăхăтра пулса пымаççĕ?—тесе ыйтсан,—Колхозниксем ĕçleme тухмаççĕ,—тесе ответлет. Çакă ĕнтĕ колхоз правленийĕ тата бригадирсем начар йертсе пынинчен, колхозниксене организацилеме пĕлменнинчен килет.

Арманкассинчи „Çĕнйал" колхозра та тырпулсене пухса кĕме начар хатĕрленеççĕ.

Районра лайăх ĕçлекен колхозсем те пур. Акă, Ќивтутайкассинчи „Кунер" колхозра тырпулсене пухса кĕме лайăх, пысăк пахалăхпа хатĕрленеççĕ. Кунта машинăсене, витнĕ итемсене, ампарсене йусаса лартнă. Жнейкăсемпе ĕçleme пĕрремĕш бригадăра Й. Никитин, иккĕмĕш бригадăра Й. Макçимăв, виççĕмĕш бригадăра М. Петров, тăваттăмĕш бригадăра М. Мельникăв колхозниксене уйăрнă.

Пр. Сатур.

Йалхуçалăх машинĕсем йусавлă

Хĕрлĕ Чутай. Колхозсен уйхирĕсенче куçпа виçейми вăйлăн çитĕнет тырпул. Çак вăйлăн çитĕнекен тырпула кĕске срукра тата тăккаламасăр пухса кĕме хатĕрленеççĕ колхозсем. Туктамăшри „Тырпул кунĕ" колхозра тырпула пухса кĕме хатĕрленес тĕлĕшпе пур колхозниксем те хутшăнса, хастарлă ĕçлеççĕ. Хальь 6 жнейкăна йусаса лартрĕç. 3 молотилкă хатĕр. Колхозниксем вĕсене витнĕ итемсем çине [illegible] лартма тытăннă.

Йалхуçалăх машинĕсене йусанипе пĕрлех витнĕ итемсен тăррине витеççĕ, вĕсене пĕлтĕрхи уламсенчен тасатаççĕ, çĕр сийне çийелтен хыраççĕ.

Тырпулсене пухса кĕнĕ чухне лашасене кÿлмели хатĕрсем, урапасем çителĕкли—пысăк вырăн йышăнса тăрать. Çавна шута илсе кунта вĕсене пĕтĕмпех кирлĕ чухлĕ хатĕрленĕ.

Колхозра çĕнĕ тырра хума 18 ампар пур. Вĕсене иртнĕ çулхи тырăсенчен пушатса, дезинфекци тунă.

Колхозницăсем хальь шăналăксем хатĕрлеççĕ, çĕнĕрен михĕсем çĕлеççĕ.

Й. Çигайĕв.

Выставкăра пулма тивĕçлĕх илнĕ колхозра

Елĕк Синерти Жданăв йачĕпе тăракан колхоза Пĕтĕм Сойузри йалхуçалăх выставкинче пулма тивĕçлĕх пани—колхозниксемпе колхозницăсен ĕçлес хастарлăхне вăйлăн ÿстерчĕ. Кăçал та колхозăн тырпулисем лайăх çитĕнеççĕ. Вăтам шутпа гектартан 100 пăтран кайа мар тĕштырă илес шанчăк пур.

Калчасене лайăх пăхса çитĕнтереççĕ. Çĕрулмисене çумласа тухса, вĕсен хушшисене пĕр хутчен купаланă.

Тырăсене вырма 3 жнейкă пур. Вĕсемпе ĕçleme чи аван колхозниксене уйăрнă. Бригадăсем выраша 5 кун хушшинче вырса пĕтерме задачă лартнă. Кĕлтесем турттарма 32 урапа хатĕрленĕ. Молотилкăсене те итемсем çине вырнаçтарса лартнă.

Тырăсене тийеме шăналăксем, 75 михĕ хатĕрленĕ. Пĕрлешÿлĕ столовăй туни—ĕç тухăçлăхне нумай ÿстерет. Çакна шута илсе столовăй, ачасен йаçлине организацилеме палăртнă. Ачасен йаçливче 52 ача пулмала.

„Кĕрхи тырăсене акма та колхоз халех хатĕрленсе пырать. Плугсене, çейлкăсене тата ытти машинăсене хатĕрлесе хунă

В. Йефремăв.

Мускаври станко-строительнăй институт аспиранчĕ инженер-механик В. С. Вихман фасоннăй детальсене чертож тăрăх хăйех тăвакан станок шухăшласа кăларнă.

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Изобретатĕл-инженер В. С. Вихман хăй шухăшласа кăларнă станок патĕнче.

А. Иоселевич фото ÿкерчĕкĕ (Сойузфото).

Стахановецсен мухтавлă ĕçĕ

КАНАШ. Вакунсем йусакан савăтри стахановецсем РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйлас умĕн тунă çитĕнÿсене çирĕплетсе татах та тимлĕрех, хастарлăрах ĕçleme пуçларĕç.

Тимĕрç цехĕнчи стахановецсем: В. Миронăв, Йасонăв тата Йефимăв йулташсем ийунĕн 28-мĕшĕнче кашнийех нормăна 590 процентшер тултарса 67—78 тенкĕшер ĕçлесе илчĕç.

Механически, урапа тăвакан тата йăвăç каскалакан цехсенче те стахановецсем паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Акă, механически цехри рабочисем—Чернов, Сычов тата Иванов йулташсем йулашки вăхăтра кулленхи нормăна 300—333 процент, Бухтулăв йулташ 460 процент тултарса пыма пуçларĕç. Йăвăç каскалакан цехри Мйаçникова, Борисăва, Антонăва йулташсем те кашнийех 200 процент ытла тултарса пыраççĕ.

Д. Иванов.

Строителствă ĕçне васкатмала

Халăх хуçалăхĕн 1938 çулхи планĕнче çĕнĕ строителствă ĕçĕ пысăк вырăн йышăнса тăрать. Проектсемпе сметăсем тăвас тата стройматериалсем хатĕрлес ĕçсене вăхăтра пурнăçа кĕртсе, строителствă ĕçне ăнăçлăн илсе пырас тĕлĕшпе халăх комиссариачĕсемпе хуçалăх организацисен тимлĕн ĕçлемеле.

Анчах пайанхи куна чылай халăх комиссариачĕсем строителствă ĕçĕпе йапăх ĕçлеççĕ. Сăмахран: Сывлăха сыхлав Халăх Комиссариачĕн руководителĕсем строителствă ĕçĕшĕн ответлăха туймаççĕ. Çавна пула Шупашкарти кус [illegible] тăвасси 1937 çулталăк [illegible] тăвасси 1938 çулталăк тăсăлать. [illegible] çуртне те виçĕ çул хушши тăваççĕ. Кунта ĕçе пачах йĕркелемен. Строителствă валли уйăрнă укçана урăх çĕре расхутлаççĕ, отчот ĕçне пăтраштарса йанă, баланс комиççийĕ йĕркеллĕ ĕçлемест.

Шкул строителстви йенĕпе те ĕçсем йапăх пыраççĕ. Хăшпĕр çĕрте проектсемпе сметăсене те хатĕрлемен (Шупашкарпа Улатăр районĕсенче). Стройматериалсене кирлĕ вырăна туртарса пыман Çутĕç Халăх Комиссариачĕн строителствă пайĕ строителствă мĕнле пынине тĕрĕслесе пымасть. Шупашкарти 880 ача вĕренмели шкул çуртне тăвасси кайа йулнă.

Строителствă ĕçĕ çине тивĕçлипе пăхманни çинчен калакан фактсем ытти организацисенче те пур. Советсен çуртне тунă çĕрте цемĕнт, витмели тимĕрсем, електропроводсем çитмеççĕ. Çавна пула строителствă ĕçĕ хуллен пырать. Улатăрти купăс хапрăкне тунă çĕрте те материалсем çитмеççĕ. Шупашкарти тата Йванăвари кирпĕч савăчĕсенче сушильнăй сарайсемпе кăмакасем туса пĕтермен.

Халăх комиссариачĕсен, хуçалăх организацисен тата строителствă организацисен руководителĕсем стройкă ĕçĕсене хăйсем йертсе пырас вырăнне, ĕçе техническиработниксен аллине шанса панă. Вĕсем техникăлă документсене хатĕрлес (сметăсем, чертожсем), строителствă валли площадкăсем уйăрас, организацисемпе [illegible] тăвас, стройматериалсем ĕç вăйĕ пухас ĕçсене хутшăнмаççĕ, ку ĕçсене тума иккĕмĕш йе виççĕмĕш работниксене хушаççĕ. Строителствă мĕнле пурнăçланса пынипе те интересленмеççĕ. Çутĕç тата Сывлăха сыхлав Халăх Комиссариачĕсем учот ĕçне йапăх туса пыраççĕ. Вĕсем строителствăра ĕçлекенсем хушшинче социалисăмлă ăмăртупа стахановла йухăма сарассине тивĕçлĕн хаклама çĕ. Çавна пула стахановла йухăм йеринен сарăлса пырать.

Строителствă ĕçне палăртнă срукра пурнăçа кĕртме условисем пур. Чăн малтанах хуçайствĕнниксен, халăх комиссариачĕсен руководителĕсен ĕçпе интересленни, ку ĕçе чăн-чăн хутшăнса ĕçлени кирлĕ.

И. Риманăв.

ЖАН-ЖАК РУССО

(Вăл вилнĕренпе 160 çул çитнĕ тĕле)

Франции чаплă писателĕ, философĕ Жан-Жак Руссо Францири буржуалă революцин учителĕ, идеологĕ пулнă. Вăл революцин аслă деятелĕсем—Робеспиерпа Марат, Сен-Жуспа Гош Руссон тĕп вырăнта тăракан ĕçне—„Общественный договор" йатлă кĕнекине пăхмасăр калама та пĕлнĕ, нумайĕшĕ çав пысăк мар кĕнекене аларан йама пĕлмен, кирек мĕнле тавлашусенче те çав кĕнекере каланă уйрăм вырăнсене, вĕсене тавлашса хирĕçлеме май çук тĕрĕс шухăш вырăнне хурса, иле-иле кăтартнă.

Çапла вара, Руссо Францири революцине—феодализăм никĕсĕсене çĕмĕрнĕ революцине хăйĕн идейисемпе хутшăннă çын пулнă. „Общественный договор" çын тата гражданин прависен Декларацине, çапла тата кайарахпа тухнă Франци республикин конституцине çуратса кăларнă çăлкуçĕ пулнă.

Руссо чăсси ăстасĕн ывăлĕ, интеллигент-плебей пулнă, вăл хăйĕн пурнăçне тĕнче тăрăх куçса çÿресе иртернĕ. Хăйĕн таврăнкурăмлăхĕнче тата пĕтĕм творчествинче Руссо вакă буржуазин ытларах сулахай, ытларах радикаллă сийĕсен шухăшĕсемпе, ĕмĕчĕсене, кăмăлĕсене палăртса пынă. Вăл сийсем—ремесла пĕтсе пынинчен терт курăкан, производствă концентрациленсе пынă вăхăтра йухăнса пыракан сийсем пулнă. Çавăнтан тухса тăнă ĕнтĕ цивилизацин усăлă пуласси [illegible] тухса тăнă ĕнтĕ [illegible] хирĕç [illegible] буржуасене хирĕç те протест туни. Çакна пула ĕнтĕ, ытти çутта кăларакансемпе танлаштарсан, Руссо позицийĕ ытларах революцилĕ пулнă. Вăл пĕтĕм туйăмсем пĕртен-пĕр ăсхакăла çеç пăхăнса тăрассине хирĕç пулнă, кăмăлсен ирĕклĕхĕ йенелле, туйăмсем йенелле, лирикă йенелле ытларах туртăнса-сулăннă.

Руссо хăйне хăй „Женевă гражданинĕ" тесе мăнаçлăн каланă.

XVIII-мĕш ĕмĕр вĕçĕнче Швейцари буржуалă демократин пĕчĕкçĕ образецĕ, Йевропăри монархисем хушшинче республикăлă утрав пулнă. Руссошăн вăл ирĕклĕхпе йĕркелĕхе кăтартса тăракан тĕслĕх пулнă. Руссо пысăк мар республикă саккунĕсене пысăк государствăсем çумне çыпăçтарса килĕштерессипе айван ĕç тесе калакаланă пулсан та, Францири политикăлă литературăра хăйĕн Швейцарийĕ çинчен, вăл чи лайăх государствă тесе, пропагандă сарнă. Анчах, çынсен пĕртанлăхĕ çинчен, „халăх" влаçĕ çинчен, общĕствăлă хутшăнусенчи тÿрĕлĕх çинчен калакан сăмахсене тăранма пĕлмесĕр итлекен халăх-семшĕн çавăн пек каласа хăварнисем çукпа пĕрех пулнă.

1741 çулта Руссо Швейцарири лăпкă вырăнсенчен, тÿлек вак буржуалă хушăран шавлă Парижа пырса лекет. Ун чухне вăл 29 çулта пулнă, музыкăна йуратнă, операсем çырнă, пуринчен ытларах композитор пуласси çинчен ĕмĕтленнĕ. Пушкин Руссо хăй „шухăшĕсене сулăмлăн картиналаса шухăшлани" çинчен çырнă. Ку вăл—Руссо сăнарĕнчи, çаплах унăн творчествинчи чи характерлă паллă теме пулать. Вăл философ тата политик пулнă, унтан та ытларах, поет пулнă—анчах вăл поэзийе шăпах философине тата политикăна илсе кĕртнĕ.

Руссо илемлĕ произведенисем—сăвăсемпе романсем те çырнă. Вăл сентиментализăм йатлă палăрса тăракан литературăлă йухăма (направленийе) пуçласа йараканĕ, унăн ашшĕ пулнă. Вăл йухăм вакă буржуазин експлоатациленекен сийĕсен шухăш-кăмăлĕсене палăртма май паракан йухăм пулнă. Руссон „Новая Элоиза" йатлă романĕ (унта учителĕ плебей пуйан аристократ хĕрне йуратни çинчен çырса кăтартнă) сословилĕ тĕшмĕш-йăласене хирĕç калана хĕрÿлĕ протест пек йанрăса кайать, сулахай демократсем хушшинче вăйлă сасăсем çĕклет. Руссо—художник урăх çĕршывсен литературисене, уйрăмăнах Германин „буря и натиск" текен тапхăрĕнчи литературине, хăй йенелле вăйлăн туртнă.

Политикăлă трактатсенчен, педагогикăлă произведенисенчен, хăй пурнăçĕ çинчен калакан повĕçрен, паллă „Исповĕдрен" епĕр Руссо поет пулнине, вăл чĕререн хĕрсе, хавхаланса ĕмĕтленекен-шухăшлакан çын пулнине куратпăр.

Джионри академин премине илме çырнă „ăслăлăхсемпе искусствăсем çинчен сÿтсе-йавни" йатлă кĕнекепе Руссо Парижа, унтан Францине, пĕтĕм культурăлă тĕнчене хăй çине çавăрăнтарса пăхтарать. Ку 1750 çулта пулнă. Унăн шухăшĕсем хăйулă тата çĕнĕ пулни, сăмахĕ чĕререн хĕрсе тухни ун чухнехи çынсене хытă тĕлĕнтернĕ. Анчах ку вăл литературă тулăшне тухнă йапала пулман-ха, Руссон революционер тата хăруш проповедник чапĕ: „Çынсем хушшинчи пĕртансăрлăх ăçтан тухни тата унăн сăлтавĕсем çинчен сÿтсе-йавни" йатлă, „Общественный договор" йатлă трактатсем пичетленсе тухнă хыççăн пуçланать.

Çав произведенисенчен пĕринче Руссо, чи малтанхи общĕствă çинчен самайах фантазилĕ краскăсемпе çырса кăтартса, çапла калать: „Çут-çанталăк йенчен илсен çынсем, тискер кайăксем пекех, пĕртан. Мĕнле-ха вĕсен хушшинче пĕртансăрлăх пулса тăнă?" Пĕртансăрлăх, Руссо шухăшĕпе, виçĕ тапхăр урлă иртнĕ, пирвайхи тапхăрĕнчех уйрăм харпăрлăх пулса тăнă. Тахăшĕ пĕри хăйне валли çĕр татăкĕ пÿлсе илнĕ те: „Ку манăн", тесе каланă. Çапла вара майĕпен пуйаннисемпе чухăннисем пулса тăнă. Хăйсен харпăрлăхне хÿтĕлемешкĕн пуйаннисем чухăннисене, пуриншĕн те лайăх тăвасшăн пек пулса, пĕрлешме хушнă. Саккунсем çирĕплетсе кăларнă, вăл саккунсем вара ĕçре ирĕклĕхе путарса тăмалли средствă пулса тăнă. Виççĕмĕш тапхăрĕнче саккунлă влаç кам вăйлă çавăн аллине куçнă, пуйаннисем вăйпах пусмăрласси, чухăнсен чуралă ĕçĕ тата чухăнлăхĕ пуçланса йĕркеленсе кайнă.

Вăл вăхăтри официаллă ăслăлăхпа политикăлă литературăра государствă çине Августин „блаженнăй" хăйĕн „Турă хули çинчен" йатлă ĕçĕнче çырса ăнлантарнă пек пăхасси пуç пулса тăнă. Государствă влаçĕ мĕнрен тухса тăнине хăйно-те турăран килекен йапала тенĕ. Турăран килмен влаç çук, тенĕ. Король турă лартнă, „турă пиллени" çын вырăнĕнче шутланнă. Пĕтĕм вăтам ĕмĕрти йĕркепе феодаллă политикă йĕркине критикăпа реформă пырса тĕкĕнмеле мар тенĕ. Пĕртансăрлăх идейине монархипе пĕр танах тасса тесе каланă.

Католиксен чиркĕвĕ тата корольлĕ монархи туса çирĕплетнĕ йĕркене критиклеме хăйакан философемпе политиксене тĕрмене хупа-хупа хунă, вĕсен произведенийĕсене çунтара-çунтара йанă. Çапах та çамрăк буржуази економикă тĕлĕшĕнчен феодализăмăн çтени айнех хирсе кĕрсе пынă, вăл чĕмсĕр ĕçлĕ критикăна ниçта хупса хума та май пулман.

Руссон пĕртансăрлăх çинчен калакан сăмахĕ йанраса кайнă вăхăтра, уншăн кирлĕ никĕс пиçсе çитнĕ пулнă. Вăл шăпах ĕнтĕ çынсем мĕн итлесшĕн пулнине каласа панă.

Вольтер кивĕ йĕркесенчен мăшкăлласа кулнă, хăйĕн куллипе вăл вăтам ĕмĕрти моралĕн никĕсĕсене кисрентернĕ. Анчах вăл çĕннине вĕрентмен йе сахал вĕрентнĕ. Вольтер хăйĕн пĕтĕм творчествин сăнарĕпе те учитĕл пек пулман, Руссо шăпах учитĕл, педагог пулнă. Вăл тÿрĕ те ырă ĕç тума ыйтнă тата хăйĕн йăлапа пурнăçри йăлисенчен нийепле те пăрăнман. Король çуртĕнче тата аристократи пурнăçĕнче пулса пыракан пысăк киревсĕрлĕхсем, ирсĕр чарусăрлăхсем çине тăрăхакан буржуази моральшĕн, ырă та тÿрĕ ĕçшĕн хыпса çуннă.

Руссо педагогикă çине мĕнле пăхни хăй вăхăтĕнче пысăк прогрессллă вырăн йышăнса тăнă, ăна вăл хăйĕн „Емил йе воспитани çинчен" йатлă ĕçĕнче каласа панă. Руссо активлăха, харпăрхăй шухăшласа ĕçлессине, физически воспитани парассине, çынсене йелти туйăмсен органĕсене вăйлатассине сарса йама ыйтнă, чиркÿ çыннисем çамрăк ачасене сийенлĕ воспитани панине хирĕç çивчĕн тăнă. Педагогикă шухăшĕн Песталоцципе Базедов пек пысăк представителĕсем çине те Руссо шухăшĕсем вăйлăн сарăлнă.

Руссон тĕп вырăнта тăракан ĕçĕ—„Общественный договор"—вăл поэзилĕ фантазипе пĕрлех прозăпа çырса кăтартни те. Унăн истори философийĕ фантазилĕ йапала. „Швейцари республикĕн йĕркисене çырса кăтартнисем прозăлă, Швейцари республĕкне унта идеаллă, чи лайăх государствă пек кăтартса панă.

„Çын ирĕклĕ çуралнă, çав хушăрах вăл пур çĕрте те сăнчăрсем ăшĕнче",—çапла пуçланать Руссо çырнă „Общественный договорăн" пĕрремĕш сыпăкĕ. Çак сăмахсене унчух пĕтĕм сулахай демократи йăрса илнĕ, вĕсем сунатлă сăмах пулса тăнă, унтан, Францири буржуалă революци çулĕсенче,—агитацилĕ лозунг пулса тăнă."

Малтан çын пулнă,—çакă ĕнтĕ Руссон политикăлă йевангелийĕ.—Вăл çын калама çук лайăх пулнă, вăл киревсĕр пăсăксене, виççĕсĕр пысăк сийенлĕ пĕртансăрлăха пĕлмен. Вăл хăйне хăй мĕнле кирлĕ çавăн пек ирĕккĕн тыткаланă, вăл ăслăлăхсене, техникăна пĕлмен пулсан та, телейлĕ пулнă. Пирвайхи общĕствă пĕртанлисен догăвăрĕн никĕсĕ çинче çуралса тухнă. Уйрăмлă харпăрлăх—çакă ĕнтĕ кайран пуçланнă пĕтĕм инкексен çăлкуçĕ. Пуçланса кайнă пĕртансăрлăх, ырă ирĕклĕ догăвăр вырăнне вăйлисем вăйсăррисене пусмăрласси, ирĕксĕрлесси пуçланса кайнă. Корольсен влаçне пуйансен [illegible]

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Йаманкасри пуçламĕш парторганизаци ĕçĕсем

Йаманкасри (Канаш р.) Доронин йачĕпе тăракан колхоз çумĕнчи пуçламĕш парторганизацинче партн членĕ 3 тата 4 кандидат. Отчотпа суйлав пухăвĕ пулнăранпа парторганизаци икĕ çынна: Куçмин Çтепанпа Владимирăв Петр йулташсене парти ретне илнĕ. Вĕсем иккĕшĕ те колхозра лайăх ĕçлеççĕ. Пĕри учотчик, тепри счетовод.

РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйланă вăхăтра ĕçлеме парторганизаци 18 агитатăр уйăрнă. Вĕсем суйлавçăсем хушшинче аван ĕçленĕ. Ун çинчен суйлавçăсен 99,4 проценчĕ суйлава хутшăнни лайăх калат. Суйлав кампанинче ĕçленĕ агитатăрсем халь пурте колхоз бригадисенче çĕнĕ займ çинчен ăнлантараççĕ.

Парторганизаци агитатăрсене куллен пулăшса пырат. Колхозниксем патне калаçу тума йарич чен малтан парторг вĕсене семинара пухат.

Колхоз клубĕнче йатарласа парткабинет организациленĕ. Парткабинета лайăх йĕркеленĕ. Анчах кĕнекесем çителĕксĕр-ха.

Парти вĕренĕвне пур коммунисемпе сочувствуйушчисене те хутшăнтарнă. Хĕллехи вăхăтра пропагандис Куçмин йулташ ĕçленĕ, ăна халĕ парти райкомĕ районти парткабинет пуçлăхĕ пулса ĕçлеме илнĕ. Куçмин йулташ хыççăн парти истори кружокне парторг—учителњница Васильйĕва йулташ йертсе пынă. Васильйĕва йулташ вĕренме кайнă хыççăн кружок ĕçлеме чарăннă. Райком пропагандис тупса пама шутламан.

Парторганизаци политикăлă ĕçпе хуçалăх ĕçне тĕрĕс çыхăнтарса пыма пĕлет. Тырпула пухса кĕме машинсене, урапасене, мих-шăналăксене, вĕренсене тата ытти кирлĕ йапаласене хатĕрлесе хунă.

Колхоз иртнĕ çулта вăйлă тырпул туса илнĕ, çавăнпа та Пĕтĕм Союзри йалхуçалăх выставкине тăма тивĕçлĕ кандидат пулнă.

Коммуниссене бригадăсем тăрăх çирĕплетсе тухнă.

Парторг замеçтителĕ Дмитрийĕв йулташ 4-мĕш бригадăра бригадир пулса ĕçлет. Унăн бригади тырпула пухса кĕме пĕтĕмпех хатĕрленсе çитнĕ.

Парти кандидачĕ Лукин Çергей 6-мĕш бригадăна йертсе пырат, ĕçре вăл йаланах малта, пример кăтартса пырат.

Петров Роман, нумай пулмаст парти кандидатне кĕнĕскер, халĕ клуб заведуйушчийĕ пулса ĕçлет, çтена хаçатне йертсе пырат.

Пуçламĕш парторганизаци партире тăман актива сочувствуйушчисен ретне хутшăнтарас йенĕпе чылай ĕçсем тунă. Пĕтĕмпе 8 çынна сочувствуйушчине илнĕ. Анчах вĕсем хушшинче куллен-кун ĕçлесе пыни, вĕсене ӳсме пулăшни çук. Çак йенĕпе парторганизаци малашне хытă ĕçлемеле пулат. Сочувствуйушчисене парти пурнăçĕн активлă ĕçне хутшăнтармала.

А. Михайлăв.

Пурнăçран кайа йулмала мар

Вăрмар районĕнчи Аслă Чакри Карл Маркс йачĕпе тăракан колхозра „Колхоз çулĕпе“ çтена хаçачĕ тухат. Хаçатăн ответлă редакторĕ В. Андрийанăв йулташ, редколлеги членĕсем Н. Тимофейĕв, Н. Алексейĕв, Г. Йакăвлĕв йулташсем. 1938 çулти ийунĕн 15-мĕшĕ тĕлне хаçат 8 номĕр тухнă.

Хаçатăн кашни номĕрĕнчех: „Çитес номĕр çине материалсем пама васкăр! Пур колхозниксем те васкăр!“—тесе çыраççĕ. Ку мĕне пĕлтерет-ха? „Колхоз çулĕпе“ хаçат редколлеги колхозниксем хушшинче çителĕксĕр ĕçлевине пула, хаçата çырса тăракан йалкорсем сахал. Йалкорсем сахал пирки материалсем çук, çавăнпа редколлеги хаçата кашни уйăхрах икĕ номĕр кăларса тăраймаст. Çакна „Колхоз çулĕпе“ хаçатăн кашни номĕрĕнчех лайăх курма пулат. Май уйăхĕнче тухнă номĕрте „Массăлă акана тухрĕç“, „Кооператив хуçисем“, „Комсомолтан тĕрĕс кăларнă“ тесе çырнă виçĕ заметка пур. Анчах çав виçĕ заметкă айне те „правлени“, „пайщик“, „комсомолец“ тесе алă пуснă.

Хаçат ĕçне колхозниксене, чи малтан стахановецсене хутшăнтарманни хаçатăн содержанийĕнчен лайăх курăнат. Апрелĕн 26-мĕшĕнче РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен суйлав кампани пуçланнă. „Колхоз çулĕпе“ хаçат апрел уйăхĕнче пирĕн çĕршыври политикăлă пысăк ĕç çинчен пĕр сăмах та çырман. Май уйăхĕнче тухнă номĕрте те суйлав кампанийĕ мĕнле пыни çинчен çырнине тупса вулама май çук. Ку çеç мар, суйлав кунĕ çывхарса çитнĕ вăхăтра тухнă 8-мĕш номĕрĕнче колхозниксем суйлава мĕнле хатĕрленни çинчен пĕр сăмах та çырман. Çапла ĕнтĕ „Колхоз çулĕпе“ РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совет суйлав кампанине активлă хутшăнас выранне, çав политикăлă пысăк ĕçĕн тулашĕнче тăрса йулнă.

Хаçатри статйасемпе заметкăсем çине редколлеги çийелтен пăхат. „Тырпулсене пуçтарса кĕме болњшевикла хатĕрленмеле“ умстатйара Карл Маркс йачĕпе тăракан колхоз çак пысăк ĕçе мĕнле хатĕрленни çинчен нимĕн те каламан. Ку статйана „Чăваш Коммунĕ“ хаçат умстатйинчен илсе çырнă. „Çум çумлаççĕ“ йатлă заметкă та çавăн пекех. Унта çум çумлас ĕçри пĕр ударник, пĕр стахановец ĕçне те кăтартса паман. Хаçата вуласан, Карл Маркс йачĕпе тăракан колхозăн пайанхи пурнăçĕпе ĕçĕсене нихăш йенчен те курма çук. Мĕнле ĕçлет колхоз, мĕнле ĕçлеççĕ, мĕнле пурăнаççĕ колхозниксем: уйхирте, фермăра ĕçлекенсем, мĕн тăваççĕ Осоавиахим, комсомол тата обшчĕствăлă ытти организацисем? Хаçатăн çаксем çинчен тĕплĕн çутатмала. Колхоз ĕçĕ çинчен, колхозниксен ĕçĕсемпе пурнăçĕ çинчен тĕплĕн çырсан, хаçата йуратса вулаççĕ, хаçата колхозниксем йуратса вуласан, йалкорсен йухăмĕ ӳсет.

ÇЕВАСТОПĂЉ—АРХАНГĔЛСК

Архангĕлскран, 38 çулхи ийулĕн 3-мĕш

МУСКАВ, КРЕМЉ

СТАЛИН ЙУЛТАША

Хаклă Сталин йулташ!

Халь, Есĕр сывлăха сунса саламланине—хамăр авиаципе унăн çыннисене вĕçĕ-хĕррисĕр йуратса сывлăх сунса саламланине илнĕ хыççăн, епĕр мĕн тери савăннине каласа пама сăмах тупмашкăн та йăвăр. Хамăрăн вĕçĕ-хĕррисĕр пысăк та телейлĕ тăван çĕршывăн хулисем, колхоз хирĕсем урлă вĕçсе, сывлăш тăрăх икĕ тинĕсе çыхăнтарса, Сирĕн йатăра, тĕнчери чи демократилĕ Конституцийе тăваканăн йатне епĕр хамăр чĕрере тытса пынă, вăл Конституци пирĕн умра телейлĕ те ирĕклĕ пурнăçăн пĕтĕм çулĕсене уçса пачĕ, вăл пире совет гражданинĕн чи пысăк телейне кĕрешсе илме—Есĕр сывлăх сунса саламланине илме, Сирĕн аллăрсене шухăшра кăна та пулин хыттăн чăмăртас телейе кĕрешсе илме права пачĕ.

Полинă ОÇИПЕНКО, Верă ЛОМАКО, Маринă РАСКОВĂ.

Архангĕлскран, 38 ç. ийулĕн 3-мĕш

МУСКАВ, КРЕМЉ

Сталин, Молăтăв, Ворошилăв, Калинин, Каганович, Йежов йулташсене

Есĕр сывлăх сунса саламлани пирĕн чĕресене калама çук пысăк хаваслăх туйăмĕ кĕртет. Пирĕн пысăк мар çитĕнӳ вăл—ирĕклĕ те вăйлă, мăнаçлă та телейлĕ, Сталин атте-анне пек тăрăшнипе çунатланнă совет хĕрарăмĕ мĕн тума пултарнине кăтартса паракан тĕслĕхсенчен пĕри кăна. Епĕр Сире, аласене усмасăр ĕçлĕпĕр тесе, çĕнĕрен çĕнĕ çитĕнӳсем тăвăпăр тесе сăмах паратпăр, кирлĕ пулсан кирек хăш самантра та, партипе правителствă пĕрре чĕнсессĕнех, çапăçу самољочĕ çине ларса совет чиккисене сыхлама вĕçсе тухмашкăн хатĕр тăратпăр.

Полинă ОÇИПЕНКО, Верă ЛОМАКО, Маринă РАСКОВĂ.

ДУÇĂ ЗЕЛЕНОВĂ,—совет планерисăмĕн маçтăрĕ, ССР Сойузĕн Косăрĕв йачĕпе тăракан Тĕп аероклубăн паллă планеристки.

Вăл планериссен Тулăра пулнă Пĕтĕм Сойузри ăмăртăвĕнче чаплă вĕçевсем тунă.

(Сойузфото).

ПИРĔН ВĔÇЕВ

Çакăн пек вĕçевĕн—хамăр тăван çĕршыв çийĕпе Хура тинĕс патĕнчен Шурă тинĕс патне çитиччен сарăлса выртакан калама çук пысăк типĕ çĕр урлă тинĕс самољочĕпе вĕçсе тухассин хăйне майлă уйрăмлăхĕпе йăвăрлăхĕсем пире тахçанах илĕртетчĕç, туртатчĕç.

Пирĕн вĕçевпе Ворошилăв йулташ тӳррĕмех хăй интересленчĕ. Ийунĕн 13-мĕшĕнче елĕ унран телеграммă илтĕм:

„Вĕçме ирĕк паратăп, материалњнăй чаççене тата тепĕр хут тĕплĕн тĕрĕслесе пăхăр. Пур йенчен те çитĕнӳ тума ырă сунатăп. Ворошилăв“.

Епĕр, Халăх Комиссарĕ канаш панă пек туса, вĕçеве тĕплĕн хатĕрлентĕмĕр, пĕтĕм материалњнăй чаççене тĕплĕн те лайăх тĕрĕслесе пăхрăмăр, хамăр вĕçмели нихăçан пулман çула тĕплĕн тĕпчесе вĕрентĕмĕр. Вĕçсе çĕкленес умĕн епĕр Ворошилăв йулташ патне телеграммă йатăмăр:

„Мускав.

Оборонă Халăх Комиссарне, Совет Сойузĕн Маршалне Ворошилăв йулташа.

Хаклă Климент Йефремăвич!

Есĕр Çевастопăљ—Архангĕлск маршрутпа пĕр лармасăр вĕçсе тухмашкăн ирĕк панă вĕçеве тытăнса, пайан гидросамољотпа вĕçсе çĕкленетпĕр, Есĕр лартнă задачăна пурнăçа кĕртетпĕрех тесе шантаратпăр.

Есĕр пире шаннăшăн тата вĕçеве хатĕрленнĕ чухне пулăшу панăшăн Сире пĕтĕм чунран тав тăватпăр.

Правителствăна тата халăхсен çулпуçне аслă Сталина пиртен хĕрӳлĕ салам калама тата вĕсене çакăн çинчен калама ыйтатпăр: хĕрарăмсен çак пĕр лармасăр вĕçевне епĕр Сире, аслă Сталинăн чи лайăх тусне те соратникне, ССР Сойузĕн йуратнă Оборонă Халăх Комиссарне Совет Сойузĕн Маршалне Климент Йефремăвич Ворошилăва халалатпăр.

Полинă Оçипенко, Верă Ломако, Маринă Расковă“.

Ийулĕн 2-мĕшĕнче 4 сехетре моторлă катĕр пирĕн самољота хăй çумне кăкарса Хура тинĕсе илсе тухрĕ, вара 4 сехет те 36 минутра, ирхи шĕвелнĕ тĕттĕмре, самољот шыв çинчен çăмăллăн вĕçсе çĕкленчĕ. Вăйлă мар çилпе хумсем вĕçсе çĕкленме пулăшрĕç. Вĕçевĕн малтанхи минучĕсем йăвăр пулчĕç, мĕншĕн тесессĕн самољот çинчи груз чылайах йăвăр пулнипе тата сывлăш вĕри пулнипе 2 километр çӳлĕшне хăпарма йăвăр пулчĕ. Çевастопăљрен Николайĕва çитиччен тĕттĕм пек шĕвĕ пĕлĕтсем хушшипе вĕçсе пытăмăр, вăл лайăх курма чăрмантарчĕ. Малала вĕçев метеорологи тĕлĕшĕнчен йăвăр, начар условисенче пулса пычĕ.

Николайĕв патĕнчен пуçласа самољот таткаланчăк пĕлĕтсем хушшине, Канев патнеле вара талкăшпех капланса тăракан пĕлĕтсем ăшне пырса лекрĕ, вăл пĕлĕтсем Архангĕлска çитиччĕн те пĕтмерĕç. Самољота пĕлĕтсем ăшĕнче йе пĕлĕтсен çийĕпе 4—2,5 километр çӳлĕшĕнче илсе пымала пулчĕ.

Кийĕв çывăхĕнче аçа-çиçĕмлĕ çăмăр пĕлĕчĕсене тĕл пултăмăр, вĕсен айккипе вĕçсе иртрĕмĕр. Новгород патне вĕçсе çывхарнă чухне пĕлĕтсене витĕр çурса тухрăмăр та 2.000 метр çӳлĕшне çити айалала антăмăр. 2.000 метр çӳлĕшĕнче 50 километра йахăн вĕçрĕмĕр, унтан каллех 4.000 метр çӳлĕшне хăпартăмăр. Новгород çывăхĕнче айалала аннă чухне самољот кăшт пăрланма пуçларĕ. Çаплах Онегă кӳлли тĕлĕпе вĕçнĕ вăхăтра та самољот пăрланни палăрчĕ.

Архангĕлск патне çывхарса пынă чух пĕлĕтре уçă вырăнсем курăнма пуçларĕç, самољот таткаланчăк пĕлĕтсем хушшипе вĕçсе пычĕ. 1.500—2.000 м. çӳлĕшĕнче вĕçсе Архангĕлск патне, шăпах палăртса хунă вырăна пырса çитрĕмĕр.

Холмовскойе кӳлли çине аван анса лартăмăр.

Матерaљнăй чаççем çул çинче пит лайăх ĕçлерĕç. Чăннипе илсен епĕр 2.416 километр тăршшĕ вĕçнĕ.

Партипе правителствă заданине пурнăçа кĕртнипе мухтанатпăр.

Аслă лейтенант ПОЛИНĂ ОÇИПЕНКО.

Архангĕлск, ийулĕн 2-мĕш.

Чаплă вĕçев

Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн Сывлăш-Çар вăйĕсен начаљникĕпе иккĕмĕш рангри командармпа—Локтионăв йулташпа калаçни

Оçипенко, Ломако тата Расковă йулташсен Хура тинĕсрен пуçласа Шурă тинĕс патне çитиччен вĕçевĕ вăл ăна хĕрарăмсем вĕçсе тухнишĕн кăна чаплă вĕçев пулса тăмаст. Ку вĕçев вăл—совет самољочĕсен пысăк пахалăхне çĕнĕрен ĕнентерсе пани, социалисăмлă тăван çĕршывăн чапне нумайлатакан совет çыннисен хăйулă та паттăр ĕçне кăтартса паракан çĕнĕ пример пулса тăрат.

Полинă Оçипенкопа Верă Ломако вĕсем—çарти чаплă љотчицăсем. Маринă Расковă вăл—Совет Сойузĕн Геройĕ Бељаков йулташ вĕрентсе хатĕрленĕ чаплă штурмăн—вăл Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн Жуковский йачĕпе тăракан сывлăш-çар Академинче штурмăн ĕçне вĕреннĕ. Хаљхи вăхăтра вăл пољарти авиацире приборсем тăрăх вĕçме йатарласах вĕренет.

Љотчицăсем Çевастопăљрен Архангĕлска вĕçме тĕплĕн хатĕрленнĕ. Çакă ĕнтĕ вĕсен вĕçевне ăнăçлă пулмала тунă.

„МП-1“ гидросамољот вĕçсе çĕкленме хатĕрленсе тăнă, вара 4 сехет те 36 минутра вăл сывлăшра пулнă. 4 сехет те 37 минутра пĕрре вĕçсе çаврăннă та 4 сехет те 40 минутра çул тытнă.

4 сехет те 58 минутра Йевпатори çийĕпе иртсе кайнă. Вĕçев вăхăтĕнче пĕр майах радио тăрăх çыхăну тытса пынă.

Акă „МП-1“ екипажĕнчен илнĕ радиограммăсем:

5 сехет те 50 минут. Скадовск. 4.500 метр çӳлĕшĕнче вĕçетĕп. Пурте йĕркелĕ.

5 сехет те 57 минут. Херсон. Пурте йĕркелĕ. Горӳчи çителĕклĕ.

6 сехет. Первомайски—Черкассы чукунçул çийĕпе пыратпăр. Пурте йĕркелĕ.

7 сехет те 20 минут. Богуслав.

7 сехет те 44 минут. Кийĕв. Пурте йĕркелĕ. Самољот çинчи çынсен сывлăхĕ лайăх.

8 сехет те 10 минут. Овруч—Чернигăв чукунçулĕ.

8 сехет те 35 минут. Речица.

11 сехет те 45 минут. Иљмењ кӳлли. Пурте йĕркелĕ.

12 сехет те 13 минут. Пурте йĕркелĕ. Званка—Череповец чукунçулĕ.

13 сехет те 38 минут. Водлозеро кӳлли. 4.000 метр çӳлĕшĕнче пыратпăр. Пурте йĕркеле.

15-сехет те 09 минутра „МП-1“ самољот Холмовски текен кӳлĕ çине лайăххăнах анса ларчĕ.

Картă çине пăхсан, тӳрех курма пулат: Оçипенко йулташ вĕçевĕ маршручĕ тĕпрен илсен типĕ çĕр çийĕпе выртнă, паллах, çакă вăл вĕçеве йăвăрлатнă.

Çул çинче чылай çĕрте вĕçеве çанталăк условисем кансĕрленĕ. Љотчицăсем пĕлĕтсем хушшипе вĕçнĕ, аçа-çиçĕмлĕ пĕлĕтсем витĕр тухнă, çавăн пек вырăнсенче приборсем кăтартнă тăрăх кăна пынă.

Полинă Оçипенко, Верă Ломако тата Маринă Расковă йулташсен вĕçевĕ совет хĕрарăмĕсем авиаци кулњтурине лайăх вĕренсе çитнине кăтартса парат. Çав вĕçев вăл пирĕн љотчицăсем кунтан та йăвăртарах вĕçевсем тума пултарнине кăтартат.

(ТАСС).

„МП-1“ самољот вĕçевĕ çинчен спорт комиссарĕсем çырнă акт

1938 çулхи ийулĕн 2-мĕшĕнче епĕр, айалта алă пуснă спорт комиссарĕсем, çак акта çакăн çинчен çыртăмăр:

1938 çулхи ийулĕн иккĕмĕшĕнче 15 сехет те 09 минутра, Архангĕлск хули районĕнче, çурçĕр широтин 64 градусĕпе 22 минучĕ тата Гринвич меридианĕнчен хĕвелтухăçнеле 42 градусĕпе 40 минучĕ тĕлĕнче вырнаçса тăракан Холмовски кӳлли çинче туса хатĕрленĕ шыв çинчи аеродром çине „МП-1“ самољот анса ларнă, самољот çинче çак çынсем пулнă:

1. Самољот командирĕ—пилот аслă лейтенант Оçипенко Полинă Денисăвнă.

2. Иккĕмĕш пилот, аслă лейтенант Ломако Верă Федăрăвнă.

3. Штурмăн-радист, лейтенант Расковă Маринă Михайлăвнă.

Пăхса тухсан çакă палăрнă: самољот пăсăлман, çĕмĕрĕлмен, бензин икçĕр килограм, çу вунă килограм йулнă. Приборсем (барографсем) пурĕ виçĕ штук, чип-чиперех, вĕсене пломбăласа хурса Мускава, Косарĕв йачĕпе тăракан Тĕп аероклубăн спорт комиссийĕ адресĕпе йăраççĕ.

Спорт Комиссарĕ майор Ковалњ.

Осоавиахимăн Архангĕлскри аероклубĕн начаљникĕ Бирулин.

БУАГФ Архангĕлскри уйрăм отрйачĕн командирĕ Аљошин.

влаçĕ—ку та çавăн пекех догăвăртан тухса тăнă йапала, унта вăйлисем вăйсăррисене пăхăнтарнă.

Енгĕлс Руссо пит тарăн диалектикăлă пулнине паллă тунă. Руссо пĕртанмарлăх çинчен вĕрентнинче Гегĕлĕн „отрицание отрицания“ пур иккене, ку вăл „... Гегел çураличчен 20 çул ытла ĕлĕкрех...“ пулнине кăтартса панă.

Руссо мĕнле пăхни çинчен çырса, Енгĕлс çапла калат:

„Мы здесь, таким образом, имеем уже у Руссо не только рассуждение, как две капли воды схожее с рассуждением Маркса в „Капитале“, но и в подробностях мы видим целый ряд тех же диалектических оборотов, какими пользуется Маркс: процессы, которые антагонистичны по своей природе, содержит в себе противоречие, превращение известной крайности в свою противоположность и, наконец, как основу всего—отрицание отрицания“ (Маркс и Энгельс. Сочинения. Том XIV. стр. 138—140).

Çынсем çут-çанталăк саккунĕсем тăрăх та пĕртан пулма тивĕçли çинчен калакан идейăна обшчĕствăлă догăвăр çинчен калакан идейăна Руссо хăйĕн пĕтĕм политикăлă тата педагогикăлă произведенийĕсем витĕр калама çук вăйлăн палăртса илсе пырат. Маркс хăйĕн „Капиталĕнче“,—Руссон политикăлă-економикăлă произведенийĕнчен çак сăмахсене илсе кăтартат: „Епĕ сире“—тет капиталис,—„маншăн ĕçлес чыса паратăп, ĕç условийĕ çапла: епĕ сире командă парса тăнăшăн (ăна еп хам çине илетĕп) есĕр хăвăрăн кăштах мĕн пуррине, тата мĕн йулнă пеккине мана паратăр“. (Маркс и Енгельс. Сочинение. Том XVII. стр. 816).

Обшчĕствă, тӳрĕлĕхлĕ те ирĕклĕ обшчĕствăлă догăвăр никĕсĕ çинче çĕнĕрен çуралмала. Çынна хăйĕн ирĕклĕх правине тавăрса парас пулат. Вăл пĕртанскер, ыттисемпе пĕрле саккунсем йышăнса çирĕплетет. Çут-çанталăк çывăхĕнче çитĕнтерсе ӳстернĕ ырă та тӳрĕ пулас кăмăл обшчествăлă никĕссене çирĕплетет. Çавăн пек вара халăхăн верховнăй влаçĕ, унăн государствăлă суверенитечĕ пулса тăрат, ку вăл турăран мар, корољран мар, çынран, ытти пĕтĕм етемсемпе пĕртан çынран тухса тăрат. Ку вăл—демократи, вăл тĕлĕнмеле ĕçсем тăват. Ку вара чаплисем чапсăррисенчен çӳлте тăнине, пуйанисем чухăннисенчен çӳлте тăнине пĕтерет. Вăл капиталиспа рабочи хушшинче мир туса хурат, мĕншĕн тесен вĕсем иккĕшĕ те пĕртан пулма тата ырă та тӳрĕ пулма пултараççĕ.

Класлă обшчĕствăри демократилĕ пĕртанлăх çинчен калакан çак утопи никĕсĕнче мĕн пулнă-ши? Швейцари буржуалă республикă пурнăçра пулни, кантонсен догăвăрĕ çинчен, пăхăнса тăрас маришĕн короњ наместникĕсене хирĕç кĕрешни çинчен калакан авалхи хыпарсемпе мухтанакан республикăлă пурнăçра пулни. Вăл пĕчĕк республикă, унти халăхсен гражданла пĕртанлăхне тĕреклĕн йĕркеленсе кайнă вакă харпăрлăхлă стройпа пĕрлештернĕ. Вăл çĕршыв Йевропăри лăпкă та тĕттĕм кĕтес пулнă, унта тусем çинче пурăнакан хресченсем хушшинче патриархаллă хутшăнусемпе пĕрле авалхи ырă-тӳрĕлĕх сыхланса йулнă пулнă.

Руссо чăннипех те „Женевă гражданинĕ“ пулнă. Вăл хăйĕн политикăлă пĕртанлăх идейисене республикăшăн тăракан çынăн хĕрӳлĕ ĕнентерӳлĕхĕпе ăнлантарса сарнă. Унăн идейăлă демократийĕ буржуалă демократи пулнă.

Феодалисăма хирĕç пынă кĕрешӳ условийĕсенче Руссо идейисенче калама çук пысăк çĕклентерӳлĕ вăй пулнă. Буржуалă демократи çинчен, вăл кирли çинчен ун пек вăйлăн урăх никам та каламан. Акă мĕншĕн ĕнтĕ буржуалă демократин класлă никĕсне те тата обшчĕствăлă догăвăр территорине истори тăрă шыв çине кăларнă хыççăн та пайтах вăхăт хушши унăн территорийĕ буржуалă обшчĕствăн малта пыракан ăсĕсене хăй йенче тытса тăнă. Вăл пĕртансăрлăха чĕререн хĕрӳлĕн тăрă шыв çине кăларни кайран утопилĕ социалисăм теоринче те палăрнă. Кабе хăйĕн „Путешествие в Икарию“ йатлă кĕнекинче ун çинчен хавхаланулă йĕркесем çырнă.

Руссо вырăссен класçикăлă литератури çине сарăлнине вăл çуралнă тапхăртан пуçласах курма пулат. Руссо пуç пулса йертсе пынă литературăлă йухăм (направление)—çентименталисăм—Карамзина хăй йенеле питĕ хыттăн туртнă. Руссо идейисем Пушкина, Лермăнтăва, Лев Толстойа тарăнăн хумхантарнă.

Руссо—иртнĕ вăхăтсен çынни. Буржуалă демократине маркçисла критиклени тĕрĕс иккенне истори пĕтĕмĕшпех çирĕплетсе пачĕ.

Пĕртанлăх тени, классене пĕтерес тенине пĕлтерет,—тесе ăнлантарат маркçисăм. Пирĕн çĕршывра коммунисăмăн пирвайхи сыпăкĕ—социалисăм—пурнăçа кĕчĕ. Коммунисăмшăн çак пирвайхи сыпăкĕн принципĕ çапла: „кашнинчен—унăн пултарулăхне кура, кашнине—унăн ĕçне кура“.

Çак принципа Сталинла Конституцире çырса хунă. Рабочи клас тунă аслă çĕнтерӳсене çырса хунă Сталинла Конституци—граждăнсен чи анлă пĕртанлăхĕ çинчен калат, ун пек пĕртанлăх урăх нихăçан та, ниçта та пулман.

Руссо етемлĕх кулњтурине пуйанлатса аслă шухăшсем сарнă, паттăрăн кĕрешнĕ çынсен шутне кĕрет. Вăл корољсемпе дворйансене хирĕç, чиркĕве хирĕç, ĕçлесе пурăнакан етемлĕх прависемшĕн кĕрешнĕ. Унăн ĕмĕчĕсемпе шухăшĕсем тава тивĕçлĕ ырă пулнă. Вăл пусмăр тӳсекенсемпе пĕрле, пусмăрçăсене хирĕç пынă. Вăл учителпулнă, вăл вĕрентнĕ çынсем кайарахпа пролетариата пирвайхи, ун чухне кирлĕ пек йĕркеленсе çитĕнсе çитмен уроксем панă.

Реакцилĕ буржуази Руссона йышăнмаст, унтан кайала чакат, ăна ылханат, унăн кĕнекисене фашиссем çунтарса йаракан кĕнекесен спискине кĕртнĕ. Буржуалă учонăйсем пĕртанлăх идейисене,—вĕсем кирек мĕнле çĕрте палăрсан та,—варлама пăсма тăрăшаççĕ, вăтам ĕмĕрти шухăшсен йулашкисене тепĕр хут çĕклесе, çынсем çут-çанталăк саккунĕсем тăрăхах пĕртан пулмала мар тесе, пĕтĕм етемлĕх „суйласа илнĕ чаплисем“ çине тата „айалта тăма тивĕçлисем“ çине уйăрлат, тесе калаçаççĕ. Çавсене кура Жан-Жак Руссон—политикăлă пĕртанлăхпа социаллă тӳрĕлĕх идейисене чĕрепе хавхаланса сарнă çынăн сăнарĕ пирĕн умра тата уççăнрах, илĕртӳлĕрех тухса тăрат.

И. Давыдăв.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Китай çарĕн бойецĕсем позицире. (Союзфото) „Пресоклише“.

КИТАЙРИ ВĂРÇĂ

(Ийунĕн 30-мĕшпе ийулĕн 4-мĕш хушшинчи вăрçă ĕçĕсене пăхса тухни)

Чженчжоу çине (Лунхай тата Бейпин — Хаңкоу чукунçулĕсем пĕрлешнĕ çĕрти стратеги йенчен питех те кирлĕ пункт) наступлени туни ăнăçлă пулман хыççăн, йапонĕцсем вăрçă ĕçĕсен центрне Аңцин хули районне, Йанцзы шывĕ патне куçарнă. Çакăнтан ĕнтĕ йапонĕцсем Хаңкоу хули çине тапăнма пуçлаççĕ.

Аңцин районĕнче çапăçусем пыраççĕ. Йапонĕцсем Матан йатлă хула çине çĕр çинчен те тата сывлăшран та хыттăн персе тăраççĕ. Хула тулашĕнчи оборонă линийе çĕмĕрнĕ. Анчах, Матан хулине паттăрăн хӳтлекен Китай çарĕсем йапонĕцсен мĕн пур атакисене сирсе пыраççĕ. Китай çарĕсен йапонĕцсене хирĕç тăрас вăйне хуçас тесе, Йапонин çар карапĕсем Йанцзы шывĕ çинчи шыва пулсе хунине çĕмĕрме хăтланнă. Çакăнпа пĕрлех йапонĕцсем химилĕ снарйадсемпе те пеме пуçланă. Анчах çак ĕçсем йапонĕцсене хăйсем ĕмĕтленнĕ резуљтатсем паман. Хаљхи вăхăтра йапонĕцсем çар карапĕсемпе Пойанху кӳлли çине тухма хăтланаççĕ, вĕсем çав кӳлĕн кăнтăр çыранне десант антарса Наңчан хули çине (Цзйанси провинци) наступлени тума шутлаççĕ.

Йулашки кунсенче çапăçусем Матан хулинчен кăнтăр йенче Пынцзе районĕнче пулса пыраççĕ. Ийулĕн 1-мĕшĕнче çĕрле Китай çарĕсем Матан хулинчен кăнтăр йенче Йапонин темиçе çĕр çынлă отрйадне çавăрса илнĕ те ăна йăлтах пĕтерсе хунă. Китай авиацийĕпе артиллерийĕ Йапонин Йанцзы шывĕ çинче çар карапĕсем çине пĕрмайах переççĕ. Ийунĕн 29-мĕшĕнче Китай авиацийĕ Йапонин пĕр карапне шыва путарнă тата Йапонин виçĕ истребитĕлне персе антарнă.

Çурçĕр Китайра Хенаң провинцинче вăрçакан Йапони çарĕсем унта çăмăр çав тери хыттăн çунипе аптраççĕ, Хуанхе йуханшывĕ пысăккăн сарăлса кайнипе вĕсене шыв илсе лартас хăрушлăх хăратса тăрать. Кайфын районĕнче вăрçакан Йапони çарĕсем, хăйсен тĕп çарĕсенчен татăлса кайассинчен шиклĕнсе, Лунхай чукунçулĕ тăрăх хĕвелтухăçнеле кайала чакаççĕ. Китай çарĕсем Вейши хулине (Кайфынрен кăнтăр-хĕвеланăç йеннеле) тытса илнĕ.

Кăнтăр Китайра Йапони авиацийĕ Сватоу çине (Гуандун провинци) пĕрмайах бомбăсем пăрахать. Ийулĕн 2-мĕшĕнче бомбăсем пăрахнипе 300 çын ытла вилнĕ тата темиçе çĕр çурта ишĕлтерсе антарнă.

(ТАСС).

Испанири фронтсенче

Левант фронтĕнче калама çук хайар çапăçусем пыраççĕ. Пуебла де Ваљверде районĕнче Пенйа Бланка патĕнчи позицире республиканĕцсем пăлхавçăсен атакисене хыттăн сирсе тăнă. Çав районтах пăлхавçăсем, авиаципе танксем пулăшса пынипе, Аљдецела йышăннă. Фронтăн хĕвелтухăç йенчи районĕнчи пысăк çапăçусем Кастељонран хĕвеланăçнеле пыраççĕ.

Центрти фронтра Естремадура районĕнче пăлхавçăсем республиканĕцсене хĕссе пырасси чакнă. Йулашки вăхăтра тунă атакăсенче пăлхавçăсен пысăк çухатусем пулнă.

* * *

Фашиссен авиацийĕ республика йалĕсем çине тапăнма хăлĕ те пăрахмасть-ха. Ийулĕн 2 мĕшĕнче фашиссем Валенçирен 40 километр çурçĕрелле ларакан йал çине бомбăсем пăрахнă. Вилнисемпе амантнисем нумай. Фашиссен 8 самољочĕ Кастељон провинцинчи Сегорбе йатлă йал çине бомбăсем пăрахма хăтланнă. Анчах республика истребитĕлĕсем вĕсене кайала хăваласа йанă.

■■ Испанири пăлхавçăсем тытса илнĕ Кордова хулинче рабочисем забастовкă тунă. Вĕсем ĕçукçи ӳстерме ыйтнă. Пăлхавçăсен влаçĕсем забастовкă тăвакан рабочисене арĕслесе, вĕсене фронтри малти линисене йама хушнă.

■■ Ийунĕн 30-мĕшĕнче Америкăн тăватă моторлă „Летающая крепость“ йатлă бомбардировщикĕ 3.700 километр вăрăмĕшне вĕççе тухнă. Вĕçессе 4.000—4 800 метр çӳлĕшĕнче сехетре вăтамăн 327 километр вĕçнĕ.

(ТАСС).

Германи çар командованийĕ Пољшăпа интересленни

ПАРИЖ, ийулĕн 2-мĕшĕ. „Евр“ хаçат Америкăн паллă журналисĕ Никербокер çырнă статйана пичетлесе кăларнă. „Чехословаки тĕлĕшĕпе хăйĕн малтанхи планĕ пурнăçланманшăн намăсланнă Гитлĕр,—тесе çырать Никербокер, — Данцига Германипе пĕрлештерни Чехословаки ыйтăвĕ ăнăçманшăн тавăрни пулĕ, тесе шутлать пулмала. Дипломатире ĕçлекенсем ун пек хăтлану пулма пултарать, тесе шутлаççĕ. Гитлĕрĕн йут çĕршывсене туртса илес планĕнчен тухма пултаракан хирĕçӳсенчен Данцига çĕнтерсе илнипе, вăрçă пулас хăрушлăх пĕтĕмпех пĕтмесен те, хăрушлăх сахалтарах пулĕччĕ. Ку шухăша пуринчен малтан Пољшă уйрăм тăни çирĕплетсе парать, Данциг Германипе пĕрлешни унăн интересĕсене уйрăмăнах туйăнтарĕччĕ. Пољшăн йут çĕршыв ĕçĕсен министрĕ полковник Бек тытса пыракан икĕ шухăшлă политика Францийе Пољшăран çав терийех пăрса йарĕ, Франци вара ун чух Данцига вăрçă тĕлĕшпе хӳтлес ĕçре Пољшăна пулăшма парахăç тăвĕ“.

Никербокер сăмахĕсем тăрăх, Германипе Пољшă хушшинче ĕçсем йулашки вăхăтра ытларах хытса пыраççĕ тата çав вăхăтрах „Германин çар командованийĕ Пољшăн çар вăйĕсем мĕнле тăнипе ытларах интересленет. Ку ĕçе Варшаваран илнĕ пĕлтерӳ лайăх кăтартса парать. Вăл пĕлтерӳре çакăн çинчен калана: Пољшăн автомобил клубĕ организациленĕ авточупува хутшăнакансем, Германи штабĕн вунултă офицерĕ, срукчен вунпилĕк кун малтан Пољшăна пынă, унта вĕсем автомобилсемпе чупмали маршрута икĕ ерне хушши тĕпчесе вĕреннĕ. Çав маршрут чикĕ хĕрĕнчи питĕ кирлĕ районсем урлă каçса кайнине пула, Германи офицерĕсем хăйсен тĕпчевне авточупу ваљљи кирлинчен нумай ытларах сарса йана“.

Никербокер малала çапла пĕлтерет: Пољшăн Парижри посолĕ Лукасевичпе Францин йутçĕршыв ĕçĕсен министрĕ Бонне хушшинче Англи Пољшăна 8 мĕлйун доллăр кивçен парасси çинчен калаçу пырать. Нимĕçсем,—тесе çырать Никербокер,—çав укçана Пољшă Германирен уйралнăшăн тата вăл союзлă державăсен шутне кайала кĕнĕшĕн тӳлени пулать, тесе шутлаççĕ.

(ТАСС).

Германири хресченсем хушшинче фашисла режим çине тарăхасси ӳссе пырать

Германирен хресченсем фашисла влаç туса иртерекен ĕçсене хирĕç тăрасси вăйланса пыни çинчен калакан хыпарсем килеççĕ.

Халиччен хресченсем Берлинри пасарсене илсе пыракан хăйсен продуктисене тӳрех вакă сутăççене сутма пултарнă. Пĕр уйăх кайарах фашиссен влаçĕсем çĕнĕ распорйажени кăларнă. Вăл распорйажени тăрăх хресченсен хăйсен продуктисене обйазательнă йĕркепех шултăра сутăççене парас пулать, унтан тата сутакан продуктăсемшĕн çийĕнчех тӳлемеççĕ, икĕ ернере пĕр хут çеç тӳлеççĕ.

Хресченсем çак распорйаженине хирĕç саботаж туса, продуктăсен пĕчĕк пайне кăна пасара илсе тухаççĕ. Ийунĕн 11-мĕшĕнче Берлинри тĕп вырăнта тăракан пасарта хресченсемпе полици хушшинче тытăçусем пулса иртнĕ. Çак кунсенче хресченсем фашиссен пасарсем тĕлĕшпе ĕçлекен „уполномоченнăйне“ хĕнесе тăкнă. Германин вăрттăн полицийĕ ултă хĕрарăм-хресчене арĕсленĕ, анчах тарăхса кайнă хресченсем хĕснипе вĕсене ирĕксĕрех ирĕке кăлармала пулнă.

Хресченсем пĕр кăмăллă пулса фашисла диктатурăна хирĕç тăни Германири ытти районсенче те пулнă. Ерланген районĕнчи пĕр йал хресченĕсем, хăйсене фашиссен хатĕрлев организацийĕ улталанă хыççăн, хулана сĕт илсе пыма пачах чарăннă. „Хресченсен забастовкине“ пусарса лартмашкăн йала жандармери отрйачĕ пынă.

(ТАСС).

Йапонири халăх пурнăçĕ начарланса пыни

Йапонире 30 тĕслĕ чи кирлĕ таварпа усă курма чаракан саккун кăларнă. Вăл 30 тĕслĕ тавар хушшинче: тир-сăран, чугун, тимĕр, цинк т. ыт. те. Ийулĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа çĕрмамĕкĕпе халăх нушисемшĕн усă курма чарса лартнă. Çĕрмамăкĕпе çар ваљљи кирлĕ йапаласем тăвакан промышлĕннăçра тата урăх çĕршывсене сутмали йапаласем тăвас ĕçре кăна усă курма йурать. Çапла туни ĕнтĕ кулĕн кирлĕ таварсем туса кăларнисене хытă чакарать тата ĕççĕр тăрса йулнисен шутне çĕнĕрен ӳстерсе йарать. Хаљхи вăхăтра Йапонире ĕççĕр тăрса йулнисен шучĕ 800 пин çынран та иртет. Çӳлте асăннă çĕнĕ саккуна ĕçе кĕртнĕ хыççăн çакăн пек ĕççĕр тăрса йулнисен шучĕ пĕр мĕлйун та 300 пин çынна çити ӳсет. Ку цифрă çумне тата ĕççĕр тăрса йулнисен çемйисене хушса шутласан, Йапонире сахалтан та тăват-пилĕк мĕлйун çын выçă пурăнаççĕ. Йапонири ĕççĕр тăрса йулнă çынсене государствă йенчен нимĕнле пулăшу та памаççĕ.

(ТАСС).

Бойецсем ваљљи хăйсен йунĕсене параççĕ

Испани республикĕн çарĕнчи санитари службин тытăмĕнче 10 пин доброволĕц вăрçăра аманнă бойецсем ваљљи хăйсен йунĕсене параççĕ.

(ТАСС).

Республикă чиккисем тăрăх 1.500 километр велоçипедсемпе

(Велочупу командорĕпе И. Мйаçникăв йулташпа калаçнинчен)

Ĕнер, ийулĕн 4-мĕшĕнче, ирхине 10 сехетре велочупу команди Шупашкара çитрĕ. Велочупу командорĕ И. Мйаçников йулташпа командăра пулнă Воронăв йулташ ĕнер „Чăваш Коммунĕ“ редакцине кĕрсе, хăйсен велочупăвĕ çинчен каласа пачĕç.

— Ку велочупăва,—тет Мйаçников йулташ,—пуçламĕш тата вăтам шкулсенче ĕçлекенсен союзĕ пуçарнипе, РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйлама хатĕрленнĕ йатпа тата Чăваш республикĕ 18 çул тултарнă йатпа организациленĕ.

Командăра 6 учитĕл-комсомолĕц: епĕ, политрук Шербинин, Воронăв, Куçмин, Рйабчикăв тата Кудрйавцĕв йулташсем.

Ийунĕн 16-мĕшĕнче кăнтăрла 2 сехетре Турханта старт пулчĕ. Унтан епĕр Шăмăршă районне çитрĕмĕр те, республикĕн чиккисем тăрăх çул тытрăмр. Ийунĕн 17-мĕшĕнче Йелчĕкре пултăмăр. Ийунĕн 19-че каçхине Куçлавккана çитрĕмĕр. Тепĕр кунне ирхине Сĕнтĕрвăррине тухса кайрăмăр. Сĕнтĕрвăрри тĕлĕнче Атăл урлă каçса Колодйайĕвка виттĕр Илйинкана пытăмăр. Ийунĕн 23-мĕшĕнче Мăн Сĕнтĕрте пултăмăр. Малалахи маршрут—Йетĕрне—Пăрачкав—Çĕмĕрле—Улатăр—Турхан. Ийунĕн 30-мĕшĕнче Турхана пырса кĕтĕмĕр: пысăк велочупу ăнăçлăн вĕçленчĕ.

15 кун хушшинче Чăваш республикĕн чиккисем тăрăх велоçипедсемпе чупса тухрăмăр, пĕтĕмпе 1.500 километр турăмăр. Машинăсем çĕмĕрĕлни пулмарĕ. Командăри çынсен сывлăхĕсем лайăх.

Пирĕн мĕнле те пулин рекорд тăвас тĕллев пулман. Епĕр çул çинче митингсем туса, халăха суйлав саккунĕпе паллаштартăмăр, Чăваш республикĕ 18 çул хушшинче Ленин—Сталин партийĕ тата Сталин йулташ йертсе пынипе тунă пысăк çитĕнӳсем çинчен каласа кăтартрăмăр. Ленинла-сталинла наци политики çĕнтернипе пула, республикăри тĕрлĕрен нацисем пĕр çемйери пек туслăн килĕштерсе пурăнаççĕ. Епĕр чăвашсемпе—чăвашла, вырăссемпе—вырăсла, тутарсемпе — тутарла, мордвасемпе—мордвала калаçусем туса иртертĕмĕр.

Çул çинче, 15 кун хушшинче епĕр 26 çĕрте митингсемпе калаçусем турăмăр, 2 çĕрте вечĕр иртертĕмĕр, 6 номĕр стена хаçачĕ кăлартăмăр. Ĕççыннисем пире пур çĕрте те ăшă кăмăлпа йышăнса илчĕç.

Ийунĕн 26-мĕшĕнче епĕр Йетĕрнере пултăмăр. Çак историлĕ чаплă кун хамăрăн сасăсене коммуниссемпе партире тăманнисен Сталинла блок кандидачĕсемшĕн—Малинин тата Ваганăв йулташсемшĕн патăмăр.

Финиш хыççăн кăшт кантăмăр та, ийулĕн 3-мĕшĕнче ирхине 8 сехетре Турхантан Шупашкара килме тухрăмăр. 165 километр хушăна йĕркелĕ чупса тухрăмăр.

Икĕ ерне хушшинче епĕр хамăрăн Чăваш республикĕнчи телейлĕ халăхсен пурнăçне куртăмăр. Колхозсен чечекленекен уй хирĕсем, çĕнелекен йалсем, хапрăк-саватсем, телейлĕ çынсем пире вĕçĕмсĕр савăнтарчĕç. Пур çĕрте те телейлĕ те тулăх пурнăç йешĕрет. Çак велочупу хыççăн епĕр хамăрăн Чăваш республĕкне тата ытларах йуратрăмăр.

Агитсамољот

ВĂРМАР. Шупашкартан вĕççе тухнă агитсамољот ийунĕн 29-мĕшĕнче Шăхаљ йалĕ патне анса ларчĕ. Самољот анса ларнă çĕре 1.000 çынна йахăн пухăнчĕç. Унтах митинг пулса иртрĕ. Агитсамољот çинчи агитатăр РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен суйлавĕсенче коммуниссемпе партире тăманнисен Сталинла блокĕ калама çук чаплă çĕнтерӳ туни çинчен каласа пачĕ.

Митингра тухса калакă колхозниксем кăçалхи тырпула лайăх пухса кĕртме пулчĕç.

И. Зайцĕв.

Горькири футбол команди Шупашкара килчĕ

Ĕнер, ийулĕн 4-мĕшĕнче, Горькири Хĕрлĕ Çар çурчĕн футбол командийĕ Шупашкара килчĕ. Хĕрлĕ Çар çурчĕн команди Горький хулинчи ăмăртура пĕрремĕш группăра выљанă, хулари вăйлă командăсенчен пĕри, Горький футболисĕсем пайан, ийулĕн 5-мĕшĕнче, Шупашкарти „Спартак“ обшчĕствин футбол командипе тĕл пулса выљаççĕ. Ийулĕн 6-мĕшĕнче те „Спартак“ команди выљать, анчах ку вăйăра „Спартак“ командине „Буревестник“ командинчи выљакансене илсе çирĕплетеççĕ.

Йапăх ĕçлет

М. Платонăв 1928 çултанпах Тепте йалсоветĕнчи Бехтерев йачĕпе тăракан колхоз (Тутаркас р.) председателĕ тулса ĕçлет. Нумай çул хушши председатĕл пулса ĕçлени вăл аван, ун пек чухне колхоз председателĕ ĕçе хăнăхса çитсе колхоз ĕçне лайăх организацилеме пултарать. М. Платонăв йулташ малтанхи çулсенче чăнахах та лайăх ĕçлесе пычĕ, анчах йулашки çулсенче йапăх ĕçле пуçларĕ.

Колхозра колхозниксен пухăвĕ çулталăкĕпе те пĕр-икĕ хутчен çеç пулать. ..ç нормисене, производствăлă плансене нихăçан та колхозниксен пухăвĕнче йышăнни çук. Колхозниксем гектартан миçе пăт тыра тухнине те, пурĕ миçе ĕç кунĕ тунине те пĕлмеççĕ.

Тырпулсене валеçнĕ чухне кашни çулах тĕрлĕ фондсенче тыра йулать. Çав фондсенчи тырра ăçта расхутласа пĕтерни çинчен те колхозниксем пĕлмеççĕ, ăна ревизи комиççийĕ те цĕлмест. Ревизи комиççи членĕсем правленийе пырсан, Платонăв çапла калать: „Ревизи тума хаљ йершу çук, кĕркунне тăвăпăр,“ тет. Çавăн пекех укçатенкĕ йенĕпе те чылай вăхăт хушши ревизи пулман.

М. Платонăв йулташ çаплах начар ĕçлесен, колхоз ĕçĕ малашне йапăхма пултарать. Районри Çĕрĕç пайĕн çавна асăрхамалах.

Н. Амелăв.

Ачасен çулахи варвитти çинчен

Ача организмĕ çутçанталăкри тĕрлĕрен чир-чĕрсене, ӳссе çитĕннĕ çынăн организмĕ пек мар, çăмăлрах парăнать. Çавăнпа та ачасем çитĕннисенчен ытларах тата йăвăртарах чирлеççĕ. Ачасен пурнăçĕпе сывлăхне сыхлас тесен вĕсене лайăх гигиенă хушнă пек йĕркелĕ пăхмала.

Ачасем уйрăмах вар-хырăм пăсăлнипе аптăраççĕ. Кун пек чух ача хăсать, варвиттине кайать, чĕри вăйсăрланать. Ачан ăшĕ пăсăласси ăна çитерме пĕлменнинчен йе унăн организмне пĕр-пĕр микробсем лекнинчен килет.

Тĕрĕс мар хатĕрленĕ çуллă апат, ачан çулĕпе килĕшмен йăвăр апат, пăсăлнă йе таса мар апат—çаксем пурте ачан вар-хырăмне пăсаççĕ, ача хăсма тытăнать, варвиттине кайать. Ачана нумай вăхăт хушши выçăхтарса пурăнса кайран апат çитерни те пăсать. Амăшĕн кăкăрĕнчен ир уйăрса ахаљ апат çитерме пуçланине пĕчĕк ача уйрăмах йăвăр тӳссе иртерет.

Ачан вар-хырăмĕ кун пек чух панă апата пĕçерсе кăларма пултараймасть. Вар-хырăмра пĕçерĕнмен (йе пăсăлнă) апат унăн хырăмлăхĕпе пыршисене ыраттарать, пыршăсенче тăвăнса ларса ытларах пăсăлма тытăнать, кунта тата апата пăсма пыршăри микробсем те пулăшаççĕ. Вар-хырăмри микробсем пăснă апатăн йулашкийĕ ача организмĕшĕн питĕ сийенлĕ. Çав сийенлĕ йапаласем пцтратнипе ача хăсать, çине-çинех тула тухать, шĕвĕ варвиттипе пĕрле унăн хырăмра пиççе çаврăнман апат тĕпренчĕкĕсем тухаççĕ.

Ача хырăмĕ ыратнипе асапланать, кансĕрленет, çĕтĕлет, апат çийейми пулать, ыйăхсăрланать, начарланать. Анчах ку вар-хырăм пăсăлнин пĕрремĕш тапхăрĕ çеç-ха (острая диспепсия). Ашшĕ-амăшĕсем тимлĕ пулса тухтăртан вăхăтра пулăшу ыйтсан, ĕç çакăнпа чарăнма та пултарать.

Хăш чухне вара, вăхăтра асăрхаса илмесен, чир шалала кайать. Варвитти вăйланать, ача питĕ шĕввĕн тула тухма пуçлать. Температурă ӳсет, ача начарланса кайать, куçĕсем ун шалала путса кĕреççĕ, пичĕ тĕссĕрленсе шуралать, ӳт-тирĕ пушанкăланать. Ача куçĕсене чарса, инçете пăхнă пек тунсăхăн пăхать. Чĕри питĕ вăйсăрланать, ăс-тăнĕ чакать. Ку пĕтĕмпех вар-хырăма сийенлĕ йапаласем витнинчен тата çавна пула ачан чи паха органĕсем: чĕри, ӳпки, пĕверĕ, пӳри, нервисем сарăпланнинчен килет.

Ачан вар-хырăмĕ çеç мар пĕтĕм организмĕ, йулашки читлĕх йулмиччен, пăсăлса кайать. Ку чире врачсем—токсическая диспепсия, теççĕ. Вăл йăвăр, вĕлерекен чир. Ку чирпе чирленĕ ача пуљницăна кайа йулса лексен. унтан сывалассине кĕтме йăвăр. Ĕлĕк-авал ку чире ача-пăча холери тенĕ, мĕншĕн тесен, вăл чăн-чăн холерă майлăрах.

Пĕр çул тултарман ачасем токсическая диспепсия текен чирпе ыттисенчен нумайрах чирлеççĕ. Икĕ çулхи йе унтан иртнĕ ачасем хушшинче ку чирпе чирлекенсем пачах сахал.

Мĕнрен килет-ха ачасем çавăн пек йăвăр чирлесе ӳкесси? Чи малтан вăл пĕчĕк ачана амăшĕ кăкринчен уйарса ахаљ апат çитерме пуçланинчен килет. Ене сĕчĕпе ир тăрантарма пуçланă ачан сывлăхĕ амăшĕн кăкрине ĕмсе ӳсекен ачан сывлăхĕнчен начартарах пулать, чир-чĕрсене те кун пек ача çăмăлрах парăнать.

Диспепçипе чирличчен ача мĕнле те пулин урăх чирпе (грипп, хĕрлĕхен чирĕсемпе, хăлха йухнипе, ӳт шыçнипе йе тата çăмăл диспепçипе чирленĕ пулсан, диспепçи чирĕ уйрăмах йăвăр пусса ӳкерет. Çавăн пекех вăрăма тăсăлса пыракан туберкуљоз, диатез (йун пăсăлни) чирĕсемпе чирленĕ ачасем диспепçи чирне ыттисенчен ытларах парăнаççĕ.

Ашшĕ-амăшĕсем ачисене нумай чухне пăхма пĕлмесĕр чирлеттереççĕ. Ачана ытлашши ăшăра тытни диспепçи чирĕ пуçланассин паллă сăлтавĕ пулса тăрать.

Пĕчĕк ача ун йĕри-таврашĕнчи температурă улшăнса тăнине йуратмасть. Хĕвел çинче йе ăшă та пăчă пӳлĕмре нумай вăхăт тытни ачашăн питĕ сийенлĕ. Ачана ытлашши ăшăра тытни ун организмĕнче йăвăр формăлă дисцепçи пуçланмали майсем туса парать: хырăмлăхра апата пĕçерсе кăларма пулăшакан сĕткен сахаллăн тухма пуçлать, пыршăсем куçма чарăнаççĕ, пĕвер тĕрĕс ĕçлеме пăрахать, йун пахалăхĕ улшăнать тата ыт. те. Çитменнине тата ачана ытлашши ăшăра тытнин сийенлĕхĕ çийенчех мар, темиçе кун иртсен тин паллă пулать.

* * *

Ачасен çулахи варвитти чирĕсенчен диспепçисĕр пуçне тата дизентери пур. Ку чирпе çитĕннисем те чирлеççĕ.

Дизентери (йунлă варвитти) чирĕ çулталăкĕпех çӳрет, анчах çулахи вăхăтра ăна сарăлма ытларах майсем пур. Ку чир сасартăках вăйлăн пуçланать, температурă хытă ӳссе кайать, çын хăсать, шăмшăкĕ питĕ йăвăрланать. Çыннăн пĕр талăк пĕтнĕ çĕреле темиçе хут тула тухнă хыççăн, сĕлехелĕ, йунлă варвитти пуçланать. Кайрантарах çын талăкне 30—50 таран тула тухма пуçлать.

Ача мĕн чухлĕ пĕчĕкрех, дизентери чирне çавăн чухлĕ йăвăртарах тӳссе ирттерет. Чăн та, хушăран çăмăл кăна чирлекенсем те пур—ача кун пек чух тула сайрарах тухать, варвиттийĕнче йун та сахалтарах пулать йе пачах пулмасть. Кун йышшисем 5—6 кунта чирлесе иртереççĕ. Йăвăр чирленисем 10—15 кун ытла асапланаççĕ.

Дизентери—питĕ йерекен чир, вăл уйрăмах ачасем хушшинче хытă сарăлать. Дизентери йертекен микробсем чĕрĕ апат çимĕç урлă (уйрăмах çуман пахча-çимĕçсемпе çырласем урлă) сарăлаççĕ. Алă çумасăр апат çиме ларни те ку чире сарăлма пулăшать. Нумай чухне дизентери микробĕсене шăнасем хăйсен урисем çинче—уборнăйсенчен, мăшкăлтăк шыв йамалилакăмсенчен, таса мар ача кипкисем çинчен тата ытти çĕртен илсе килеççĕ. Çапла ĕнтĕ чирлĕ çын хăй, вăл тула тухнă йулашкийĕсем, унăн йапалисем сывă çынна чир кӳрекен йапаласем пулса тăма пултараççĕ.

Вар-хырăм пăсăлни (токсическая диспепсия) тата дизентери чирĕсем ачасене питех те нумай çулса кайаççĕ. Çавăнпа та пирĕн—врачсен тата ача-пăча ашшĕ-амăшĕсен çулахи варвитти чирĕсемпе кĕрешес ĕçе, ача-пăчана çав чирсемпе чирлесрен сыхлас ĕçе çине тăрса тимлĕн туса пымала.

Кашни ача амăшĕ хăйĕн ачине тĕрĕс тăрантарса пурăнмала, гигиенă ыйтнă пек лайăх пăхмала. Кӳренмеле йăнăшсем тăвас мар тесен, ача амăшĕ консуљтацине йĕркелĕн çӳремеле, врач кăтартса панисене çирĕп туса пымала. Çулахи вăхăтра ачана кăкăртан уйăрма тата апата çĕнĕ, уйрăмах çуллă йапаласем хушма йурамасть, ачана час-часах шыв ĕçтермеле, куллен шыва кĕртмеле йе çан-çурăмĕ тăрăх 30 градус таран ăшă шыв йарса илмеле, хĕвел çинче нумай вăхăт тытмала мар, пĕр çул тултарман ачасене хĕвел ваннинче вырттармала мар, пӳртре чӳрече кантăкĕсене талăкĕпех уçă тăратмала, ачана чăркамала мар, мамăк çивиттипе те хуплама йурамасть,—çакă çăмăл правилăсене кашни ача амăшĕ, кашни ача ашшĕ лайăх пĕлсе тăмала. Ача чирлени паллă пулсан, ун çинчен вăхăтра, 24 сехетрен кайа йулмасăр врача пĕлтермеле.

Ача амăшĕ ача организмĕпе ăна мĕнле пăхмали çинчен ытларах пĕлме тăрăшмала, вăл ку ыйтусемпе тивĕçлĕ кĕнекесем вуламала, лекцисемпе калаçусене итлемеле, консуљтацине çӳремеле, врачсемпе канашламала.

Ачасен сывлăхне сыхлас ĕçре ача амăшĕн куљтурлăхĕ пысăк вырăн йышăнса тăрать. Санитарипе гигиенă правилисене пĕлекен ача амăшĕсем врач кăтартса панисене лайăх пурнăçа кĕртсе пыраççĕ, ачисене пăхнă чух, тăрантарнă чух йăнăшсем тумаççĕ, çапла май вĕсене чирлесрен сыхлаççĕ.

(Н. Сперанский профессăр статйинчен).

Тӳрлетни

„Чăваш Коммунĕ“ хаçатăн ĕнерхи (152-мĕш) номĕрĕнче пичетленсе тухнă Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ „Выљăх-чĕрлĕх ĕрчетмели 1938 çулхи государствă планĕ çинчен“ йышăннă постановлени çумне хушса çырнисенчен 1-мĕш таблицăра „Сурăхсем“ тенĕ графара Тăвай районĕ тĕлĕнчи цифрă йăнăш пичетленнĕ, ăна—„1350“ вуламала, 5-мĕш таблицăра „Ăратлă сысна аçисемпе чуптармала“ тенĕ графа айĕнчи „Пĕтĕмпе“ тенĕ графара Тутаркас районĕ тĕлĕнче—„3200“ вуламала; 6-мĕш таблицăра „Хĕрлĕ горбат ăратăри“ графара Çĕмĕрле районĕ тĕлĕнче нимĕн те пулмала мар; 9-мĕш таблицăра „зоотехникă участкисем“ тенĕ графара Тутаркас районĕ тĕлĕнче „5“, Йетĕрне районĕ тĕлĕнче „6“ шутламала; çав таблицăрах „Ветбаклабораторисем“ тенĕ графара Йелчĕк районĕ тĕлне „1“ пичетленнине Шупашкар хулин—шутламала.

Ответлă редактăр Н. Ш. СЕМЕНАВ.

ШУПАШКАРТИ ÇĂКĂР ПĔÇЕРЕКЕН САВАТА

Квалификацилĕ пекăрсем, Пекăра пулăшакансем

ТАТА

Булнă пĕçерекенсем

КИРЛĔ

Çăкăр пĕçерекен саватă кантурне пымала.

Уполномоченный Чувашглавлита № 336

Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста, заказ № 581.